ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Январь
15
ЫТЛАРИКУН
№ 11 (8663)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (1 стр.).
«ПАДЕНИЕ БЕРЛИНА» кинокартинăна чăвашла куçарса кăларнă. П. Киселев.—Ĕçлеме тата кĕрешме хавхалантаракан картина; С Эльгер.—Чĕререн савăнтаракан ĕç; Леонид Агаков.—Чаплă фильм; Т. Андреева.—Хумханмасăр пăхма çук; С. Данилов.—Колхоз клубĕнче; А. Хорьков.—Тăван çĕршыва юратма вĕрентекен фильм (2 стр.).
Совет Правительстви США Правительствине панă нота (3 стр.).
ООН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ АССАМБЛЕЙИН УЛТТАМĔШ СЕССИЙĔ. ООН Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕ (3—4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Иран правительстви Англи правительствине нота панă (4 стр.).
Англи çарĕсем Египетра çĕнĕрен агрессиллĕ ĕç тунă (4 стр.).
Иракра прогрессивнăй деятельсене хĕсĕрлеççĕ (4 стр.).
Республикăри шахмат чемпионачĕ (4 стр.).

Ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе лайăхлатассишĕн

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе социализмлă промышленность çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерўсем тăвать. 1951 çулта çĕршыври промышленность, 1940 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах продукци туса кăларнă. Фабрикăсемпе заводсем хăватлă оборудованипе хĕçпăшалланаççĕ. Çĕршывра çулсерен пиншер предприятисем ĕçе кĕреççĕ Совет халăхĕ коммунизмăн техникăллă никĕсне хывать.

Социализмлă промышленность хăвăрт аталанса пыни пирĕн умма хăватлă техникăна тухăçлă ĕçлеттерме пултаракан ăста рабочисем тăтăш вĕрентсе хатĕрлес задача кăларса тăратать. Большевиксен партийĕпе Совет правительстви çамрăк рабочисем вĕрентсе хатĕрлессине, кадрсене большевикла воспитани парассине, вĕсен ăсталăхне пĕрмай ўстерсе пырассине государствăллă пысăк ĕç тесе шутлаççĕ.

Пирĕн çĕршывра çамрăксем валли вĕренме, кăмăла каякан специальность туянма, ăсталăха тăтăш ўстерсе пыма мĕн кирлине пурне те туса панă. Нумай çамрăксем ФЗО шкулĕсемпе ремесла тата чугун çул училищисенче вĕренеççĕ. Предприятисенче техникăна вĕренмелли курссемпе кружоксем ĕçлеççĕ. Чылай çамрăксем каçхи шкулсемпе техникумсенче е заочно вĕренеççĕ. Совет çамрăкĕсем телейлĕ ўссе çитĕнеççĕ, çĕнĕ техникăна алла илсе, новаторсен опычĕпе анлă усă курса, коммунизм строительствине активлă хутшăнаççĕ.

Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче пирĕн республикăра çĕршер предприяти туса лартнă, вуншар пин ăста рабочи вĕрентсе хатĕрленĕ. Нумай стахановецсем çĕнĕ техникăна алла илес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. М. Сысуйкин, Н. Королев, А. Дюжев, Ф. Степашкин стахановецсен çитĕнĕвĕсене республика тулашĕнчи рабочисем те пĕлеççĕ.

Партипе правительство пирĕн республикăра промышленноçа малалла аталантарассине уйрăмах пысăка хурса хаклаççĕ. Кăçал тата çитес çулсенче пысăк предприятисем туса лартма, киввисене çĕнетсе анлăлатма палăртнă. Фабрикăсемпе заводсем, электростанцисемпе строительство организацийĕсем хăватлă техникăпа пуянланаççĕ, технологи процесне çĕнĕлле йĕркелеççĕ, наукăпа техника çитĕнĕвĕсемпе, малта пыракансен опычĕпе анлă усă кураççĕ.

Промышленноçа малалла аталантарасси, предприятисем государство заданийĕсене чыслă пурнăçласси ăста рабочисем çителĕклĕ вĕрентсе хатĕрленинчен, кадрсен квалификацине тавракурăмне пĕрмай ўстерсе пынинчен килет. Малта пыракан предприятисенчи партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем, хуçалăх руководителĕсем кадрсем вĕрентсе хатĕрлессине. вĕсене большевикла воспитани парассине пысăка хурса хаклаççĕ. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод çĕнĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлемелли иртнĕ çулталăкри плана виçĕ хут ирттерсе тултарнă, кадрсен ăсталăхне ўстермелли задание чылай ирттерсе пурнăçланă. Шупашкарти пир-авăр фабрики, Çĕмĕрлери «Большевик» завод, Улатăрти пăравуссем юсакан завод хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслă пурнăçласа пыни партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем, хуçалăх руководителĕсем кадрсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне пĕрмай ўстерсе пынинчен, вĕсемшĕн куллен тимлĕ тăрăшнинчен килет.

Çав вăхăтрах чылай предприятисенче кадрсемпе ĕçлессине кирлĕ пек йĕркелемен. ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ промышленноçра кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Партипе Советсен вырăнти органĕсем тата хуçалăх руководителĕсем чăваш халăхĕнчен ăста рабочисем хатĕрлессишĕн тимлĕ тăрăшмаççĕ. Пир-авăр комбинатне тăвас ĕç юлса пыни, вăрман промышленноçĕнче механизмсемпе тулли усă курманни, вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ туса кăларакан продукцийĕн пахалăхĕ çителĕксĕрри—çаксем вĕсем пуринчен ытла ăста рабочисем çитменнинчен, кадрсен квалификацине ўстерсе пыманнинчен килет.

Ăста рабочисем планпа палăртнă чухлĕ пулманнипе «Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан чылай вăрманпромхозсем механизмсене пĕр сменăпа çеç ĕçлеттереççĕ. Каменщиксем, бетонщиксем, платниксем çитмен пирки пĕлтĕр строительствăпа монтаж управленийĕ пир-авăр комбинатне тума уйăрса панă укçа-тенкĕпе пĕтĕмĕшпех усă кураймарĕ.

«Техникăна ĕçе ярса унпа тулли усă курмашкăн техникăна вĕренсе алла илнĕ çынсем, çав техникăна пĕлсе искусствăн пур правилисем тăрăх та унпа усă курма пултаракан кадрсем кирлĕ. Техникăна алла илнĕ çынсемсĕр, техника вăл—виле япала. Техникăна ăна вĕренсе алла илнĕ çынсем ертсе пыраççĕ пулсан, техника тĕлĕнмелле хăватлă ĕçсем тума пултарать, тума та тивĕçлĕ», тесе вĕрентет пире И. В. Сталин юлташ. Аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр çак сăмахсене каланăранпа 16 çул ытла иртрĕ. Халĕ, коммунизмăн аслă стройкисене тунă, промышленность çав тери кăткăс механизмсемпе хĕçпăшалланса пынă вăхăтра, çулпуçăн аслă сăмахĕсен пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк.

Руководительсен пирĕн работниксене, вĕсем кирек мĕнле ĕçре ĕçлеççĕ пулсан та, питĕ тăрăшса пăхса ўстермелле, вĕсене кирлĕ чухне пулăшу памалла, лайăхрах ĕçлеме хаваслантармалла.

Çамрăк рабочисене вĕрентесси, вĕсене большевикла воспитани парасси, малта пыракан опытпа паллаштарасси—предприятисенчи партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен ĕçĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла. Кашни предприятире, стройкăра рабочисем валли техникăна вĕренме лайăх майсем туса парас пулать. Курссем, кружоксем, стахановла шкулсем организацилени, лекцисемпе докладсем тăтăш ирттерни, наукăпа техникăн çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыракан предприятисен, рабочисен опычĕпе паллаштарни, рабочисемпе инженерсем хушшинчи туслăха çирĕплетни—çаксем вĕсем пурте кадрсен ăсталăхне тата пултарулăхне ўстерме пулăшакан майсем пулаççĕ.

Çамрăк рабочисене большевикла воспитани парас, вĕсен активлăхне пĕрмай ўстерсе пырас тĕлĕшпе уйрăмах комсомол организацийĕсем пысăк ĕç тума пултараççĕ Вĕсен, парти организацийĕсем ертсе пынипе, çамрăксене марксизм-ленинизм теорине тĕплĕ вĕренме, социализмлă ăмăртăва активлă хутшăнма пулăшмалла, ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсене большевикла хăюллăхпа пĕтерме, производствăри дисциплинăна çирĕп сыхлама хăнăхтармалла. Каçхи вăтам шкулта, техникумра е заочно вĕренекен çамрăксене занятисене ăнăçлă хатĕрленме лайăх майсем туса пани кирлĕ.

Кашни предприятире тенĕ пекех ФЗО шкулĕсемпе ремесла е чугун çул училищисенчен вĕренсе тухнă çамрăксем ĕçлеççĕ. Çав çамрăксене хăйсен ăсталăхне тата пĕлĕвне малалла ўстерме куллен пулăшас пулать.

Предприятисене çулсерен рабочисем вĕрентсе хатĕрлемелли тата кадрсен квалификацине ўстермелли план çирĕплетсе параççĕ Парторганизацисен çав плана мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăмалла, кадрсем вĕрентес ĕçре тĕл пулакан çитменлĕхсене вăхăтра пĕтермелле.

Халĕ предприятисенче 1951 çулхи коллективлă договорсене пурнăçа мĕнле кĕртнине тĕрĕслеççĕ, çĕнĕ договор тума хатĕрленеççĕ. Кадрсем вĕрентсе хатĕрлесси, вĕсен квалификацине ўстересси—коллективлă договорта тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Республикăра ФЗО шкулĕсем, тĕрлĕ курссем, профшкулсем нумай организациленĕ. Партипе Советсен вырăнти органĕсен, комсомол организацийĕсен çав шкулсемпе курссен ĕçĕпе тăтăш интересленни, вĕсен руководителĕсене çамрăксене большевикла воспитани парас ĕçе вăйлатма куллен пулăшни кирлĕ.

Партипе правительство сталинла тăрăшни çине ответлесе, совет çамрăкĕсем коммунизм строительствинче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ, патриотла çĕнĕ ĕçсем пуçарса яраççĕ.

Кадрсем вĕрентсе хатĕрлес, вĕсен ăсталăхне пĕрмай ўстерсе пырас ĕçе тата сўлĕрех пусăма çĕклер!

Совет Союзĕ тăрăх

★

Ленин кунĕсем умĕн

Предприятисенче, колхозсемпе совхозсенче, шкулсенче тата Совет Çарĕн чаçĕсенче Ленин кунĕсене паллă тума хатĕрленеççĕ. Пиншер агитаторсем ĕçсыннисене большевиксен партине организацилесе ертсе пынă, социализмлă Совет государствине туса хунă аслă çулпуçăн—В. И. Ленинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Агитаторсем совет халăхĕ Ленин ĕçне малалла туса пыракан, ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕ И. В. Сталин юлташ ертсе пынипе тунă çитĕнўсемпе ĕçсыннисене паллаштараççĕ.

Эстони ССР-ĕнче, сланец кăлармалли бассейн центрĕ пулса тăракан Кохтла-Ярва хулинче политикăллă тата наукăллă пĕлўсем саракан общество членĕсем аслă Ленин пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен лекцисем вуласа пама тытăннă. Республикăри хуласемпе ялсенче «Владимир Ильич Ленин», «Ленин в Октябре», «Ленин в 1918 году», «Клятва» кинокартинăсене кăтартаççĕ.

Одесса облаçĕнчи Балтски районти Еленовка ялĕнчи клубра Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри 150 колхозник ытла «В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ» ятлă доклад итленĕ. Лендзары ялĕнче лекторсен группин членĕсем «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе малалла» темăпа лекцисем вуласа параççĕ.

Камчаткăпа Чукотка районĕсенче агитаторсем сунарçăсемпе пулă тытса пурăнакан халăхсене В. И. Ленин çинчен каласа параççĕ.

Карело-Финн ССР-ĕнчи Прионежски районти вăрманпромхозсемпе колхозсене докладчиксем кайнă. Кабардин АССР-ĕнче, Астрахань облаçĕнче, Уфара, Ижевскра, çĕршыври ытти хуласенче те Ленин кунĕсене паллă тума хатĕрленеççĕ. (ТАСС).

Н. В. Гоголе асăнса

Вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине палăртма хатĕрленес ĕç пирĕн çĕршывра анлă сарăлса пырать.

Грузире республикăри юбилей комитечĕн ларăвĕ пулнă. Гоголе асăнса ирттернĕ кунсенче мĕнле ĕçсем тумаллине палăртнă. Ш. Руставели ячĕпе тăракан драма театрĕпе Грузири совет писателĕсен Союзĕнче Гоголе асăнса вечерсем пулаççĕ. И. В. Сталин ячĕпе тăракан университет тата Грузи ССР-ĕнчи Наука академийĕн грузин литератури историйĕн институчĕ аслă писателĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен научнăй сессисем ирттереççĕ. Гоголь произведенийĕсен пĕр томне тата унăн пурнăçĕпе творчестви çинчен монографи пичетлесе кăлараççĕ. (ТАСС).

Шыв килсе тăма пуçлать

ДОН çинчи РОСТОВ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ростов облаçĕнче колхозсемпе совхозсен 100 пин гектар çĕрне шăварса тăмалла туса çитереççĕ. Кунта «Ростовдонводстрой» управленийĕ каналсем тунă çĕрте 14,6 миллион кубометр çĕр чавса кăларнă, çĕр чавмалли тата 1,28 миллион кубометр юлнă. Каналсем пулмалли вырăнсенче уйăхри тырпула шăвармалли 1.883 сооружени тунă. Кăçал çулла Семикаракорски, Мартыновски, Романовски, Веселовски тата ытти районсенчи типĕ çĕрсене Дон шывĕпе шăварса тăма тытăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра тĕп каналсенчен уя шыв илсе пымалли пĕчĕк каналсем тăваççĕ, пирченнĕ хыççăн дамбăсем çумне тата çĕр купалаççĕ, каналсем çинче çĕре шăвармалли сооруженисем тăваççĕ.

Çĕнĕлле ĕçлекенсен пуçарăвĕсене ырланă

Автомобильпе трактор промышленность министерствин коллегийĕнче

Январĕн 11-мĕшĕнче Автомобильпе трактор промышленность министерствин коллегийĕпе профсоюз центральнăй комитечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулнă. Ларăва Мускаври автомобильпе трактор промышленность завочĕсен директорĕсем, министерство главнăй управленийĕсен начальникĕсем хутшăннă. Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнчи рабочисемпе специалистсен паха пуçарăвне пăхса тухнă. Вĕсем кашни япалана, кашни изделие туса кăларнă чухне металл расходлассине чакарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарнă.

Тимĕрçĕсен бригадирĕ В. Кокошка, тимĕрçĕ цехĕн начальникĕн заместителĕ С. Павлов тата заводри профсоюз комитечĕн председателĕ Н. Грузинцев çĕнĕ ĕç пуçарни çинчен каласа панă. Кăçал тимĕрçĕсен коллективĕ 1.300 тонна металл перекетлет, çакă вăл завода миллион тенкĕ ытла перекетлеме май парать. Завод директорĕ К. Власов çапла пĕлтернĕ: перекетленĕ металпа пĕлтĕр планран ирттерсе грузсем турттаракан машинăсем нумай туса кăларнă. Çĕнĕ пуçару планран ирттерсе продукци туса кăларма тата пысăкрах майсем туса парать.

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнчи çамрăк рабочисен тата специалистсен патриотла пуçарăвне министерство коллегийĕпе профсоюз центральнăй комитечĕ ырланă. Вĕсен опытне автомобильпе трактор промышленноçĕн мĕнпур предприятийĕсенче сарма йышăннă.

* * *

Çав ларурах Харьковри велосипед тăвакан заводра метала хăвăрт касса ĕçлекен токарь Анатолий Скубневский, Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнче метала хăвăрт касса ĕçлекен токарь Сергей Бушуев пуçарăвĕсене пăхса тухнă.

Анатолий Скубневский касакан çĕнĕ инструментсем тата кирлĕ ытти хатĕрсем тунă, çавсем метала минутра виçĕ пин метр таран хăвăртлăхпа касса ĕçлеме май панă. Вăлах тата машинăпа ĕçсем тунă вăхăта, пулăшуллă вăхăта чакарма, çавăн пекех улшăнакан сменăсене станоксене йĕркеллĕ ĕçлемелле туса пама сĕннĕ.

Хăвăрт ĕçлекен токарĕн ĕç майĕсемпе Харьковри велосипед завочĕн цехĕсенче анлă усă кураççĕ.

Сергей Бушуев вăрçă хыççăнхи пилĕк çуллăхра çирĕм çулхи нормăна, иртнĕ çулта—пилĕк çулхи нормăна тултарнă. Ĕç хăвăртлăхне вăл тĕрлĕ хатĕрсемпе тата хăй сĕннĕ тăрăх тунă çĕнĕ инструментпа усă курса ўстерме пултарнă. Стахановец метала хăй пек хăвăрт касса ĕçлеме автозаводри нумай рабочисене вĕрентнĕ.

Метала хăвăрт касса ĕçлекен токарьсен пуçарăвне Автомобильпе трактор промышленность министерствин коллегийĕпе профсоюз центральнăй комитечĕ ырланă. Метала хăвăрт касса ĕçлемелли опытпа паллашма темиçе заводра пĕрле шкулсем тума пăхнă. Анатолий Скубневские, Сергей Бушуева, Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри çамрăк стахановецсене тата специалистсене, паха пуçару тунăшăн, автомобильпе трактор промышленноçĕнчи социализмлă ăмăрту отличникĕ значок парса наградăланă. (ТАСС).

Тирасполь хулинче Молдавири виçĕ çул вĕренмелли ялхуçалăх шкулĕ ĕçлет. Шкул колхозсем валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлет. Çак шкултан вĕренсе тухнисем 200 çын ялхуçалăх артелĕсен председателĕсем пулса ĕçлеççĕ. [illegible] колхоз руководителĕсем тата 300 çын шкулта вĕреннĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: лашасен ăрачĕсем çинчен вĕренеççĕ. Малти вырăнта — иккĕмĕш курсра вĕренекенсем И. П. Георгица тата Б. К. Трифан.

П. ЛИСЕНКИН фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Туркмен ССР-ĕ. Ильялински районĕнчи (Ташауз облаçĕ) «Большевик» колхоз республикăра пуринчен малтан çĕре çĕнĕ майпа шăвармалла тунă. Çакăншăн колхоз председательне Социализмлă Ĕç Геройне Раджебкули [illegible] Пĕрешиччен 9 колхозăн уя шыв илсе пымалли 17 канал пулнă пулсан, халĕ пĕр канал тунă. Каналри шывпа 2.400 гектар çĕре шăварса тăраççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Большевик» колхозăн уя шыв илсе пымалли каналĕ.

О. КУЗЬМИН фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Халăх демократи çĕршывĕсенче

★

Албанири уяв

ТИРАНА, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Албани халăхĕ хăйĕн республикине туса хунăранпа ултă çул тултарнине Мата юханшывĕ çинче пысăк гидроэлектростанци тума тытăннипе уявланă. Гидроэлектростанци лартакан территорире, Бурел районĕн центрĕнче, пысăк митинг пулнă. Унта хула халăхĕ тата çывăхри ялсенчи тата пĕтĕм районти хресченсем пухăннă.

Митинга Министрсен Совечĕн председателĕ Энвер Ходжа, Албанири ĕçлĕх партийĕпе правительствăн ертсе пыракан деятелĕсем, Совет Союзĕн тата халăх демократи çĕршывĕсен дипломати миссийĕсен представителĕсем пынă.

Митингра Энвер Ходжа сăмах тухса каланă.

Митинга пухăннисем пысăк хаваслăхпа И. В. Сталин юлташ патне саламлă телеграмма яма йышăннă.

Болгари халăхĕ вырăс чĕлхине вĕренет

СОФИЯ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире вырăс чĕлхине вĕренес ĕç анлă сарăлнă, халăхăн йышлă массисем вырăсла вĕренме тăрăшаççĕ. Хальхи вăхăтра Болгари хулисемпе ялĕсенче вырăсла вĕренмелли 4 пин курс ытла ĕçлет, вĕсенче 90 пин çын ытла вĕренет. Болгарипе Совет Союзĕн туслăх обществисен союзĕ иртнĕ çулта вырăс чĕлхине вĕренме тытăнакансем валли учебник кăларнă, ăна 100 пин экземпляр пичетленĕ. Вырăс чĕлхине тĕплĕ вĕренме тăрăшакансем валли те учебник пичетлесе тухнă, унăн тиражĕ—30 пин экземпляр.

Польша халăхĕ миршĕн кĕрешес ĕçре

ВАРШАВА, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм çĕршывĕпех миршĕн тăракансен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Пухусенче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн иккĕмĕш сессийĕ йышăннă решенисене сўтсе яваççĕ. Ĕçсыннисем сесси решенийĕсене пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ, пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшў тума, Корейăри вăрçа чарса лартма, Хĕвеланăç Германие хĕçпăшалсăрлантарма, демократиллĕ пĕрлĕхлĕ Германи тума, атомлă хĕçпăшала чарса лартма ыйтаççĕ.

Çавăн пек пухусем Варшавăри рабочисем пурăнакан Мокотув, Воля, Старувка районĕсенче те пулнă. Варшавăпа Люблин воеводствисенче пухусем пысăк çĕкленўпе иртнĕ.

Миршĕн тăракансен пухăвĕсене халăхăн мĕнпур сийĕсем—рабочисемпе хресченсем, интеллигенци представителĕсем, священниксем тата ыттисем те пыраççĕ.

Венгрире наука аталанса пырать

БУДАПЕШТ. (ТАСС). «Сабад неп» хаçат Котута ячĕпе паракан премие лауреачĕ Л. Яноши академик статйине пичетлесе кăларнă. Л. Яноши [illegible]

— Манăн Англири хăшпĕр коллегăсем,—тесе çырать Яноши,—эпĕ мĕншĕн Англирен тухса килнине ăнланса илмеççĕ. Нумайăшĕ мана: Венгрире наука ĕçĕсене туса пыма пултараймăн, тесе калатчĕç. Анчах халăх демократи мана ĕçлеме питĕ лайăх майсем туса пачĕ.

Венгрие ирĕке кăларнă хыççăн çĕршывра вуншар наукăпа тĕпчев институчĕ уçнă. 1951 çул вĕçĕнче Венгри Халăх Республикинчи наука академийĕ наукăна аталантарса пымалли пилĕк çуллăх плап туса хатĕрленĕ. План çĕршыври ученăйсем умне пысăк ыйтусем кăларса тăратнă. Вĕсен ĕçĕсем Венгрие социализмла индустриализацилес ĕçре, ялхуçалăхне улăштарса çĕнетес ĕçре тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçе вăйлатса пыма пулăшмалла. Халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕк çуллăх план тăрăх наукăна аталантарса пыма 1,7 миллиард форинт укçа уйăрса параççĕ.

Тавар хакĕсем йўнелнĕ

Венгри Халăх Республикинче таварсене карточка тăрăх памалли йĕркене пăрахăçа кăларнă хыççăн, пасарта тавар хакĕсем йўнелнĕ. Карточкăсене пĕтересси çинчен постановлени тухиччен пасарта пĕр килограм сало 65 форинт тăнă пулсан, халĕ 48 форинт тăрать. Пасарта çу, хăйма тата ытти çимĕçсен хакĕсем те чылай йўнелнĕ. (ТАСС).

Вырăссен аслă çулçўревçи Англипе Америка колонизаторĕсем çинчен

Н. Н. Миклухо-Маклайăн пичетре пулман çырăвĕсем

ЛЕНИНГРАД, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Н. Н. Миклухо-Маклайăн Ленинградри архивсенче упранакан алçырăвĕсем хушшинче унăн пичетре пулман çырăвĕсене тупнă. Вĕсене 1874—1875 çулсенче çырнă.

Вырăссен Географи обществи ячĕпе янă çырусенче çулçўревçĕ Малакка çурутравĕ çинчи хăй сăнаса вĕреннĕ халăхăн пурнăçĕпе культури çинчен мĕншĕн нимĕн те çырманнин сăлтавĕсене ăнлантарса парать. Çав çулсенче Англи, агрессиллĕ политикăна пурнăçласа пырса, хăйĕн аллисене Малакка çурутравĕ çинелле тăснă. Малаецсем çинчен мĕн те пулин пичетленсе тухсан, акăлчансем вĕсемпе пĕр тăхтаса тăмасăр хăйсен агрессивлă тĕллевĕсене пурнăçлас çĕрте усă курассине пĕлсе, Миклухо-Маклай çырура çакна кăтартса панă: «мана шанса пурăнакан малаецсем, ун пек ĕçе шпион ĕçĕ тесе калама пултарĕччĕç... Çавăнпа та манăн пĕлтерўсенче Малакка çурутравĕн хальхи социальнăй е политикăллă пурнăçĕ мĕнле пулни çинчен çырнине ан кĕтĕр...»

1875 çулта Голланди хаçачĕсенче Англи Çĕнĕ Гвинейăна колони туса хума шутлани çинчен çырнă пĕлтерўсем тухнă. Халиччен пичетре пулман, П. П. Семенов-Тян-Шанский патне янă çырура Н. Н. Миклухо-Маклай çапла çырнă: «Эпĕ çав аннекси (вăйпа тытса илни) çине лăпкăн пăхса тăракан çын пулма пултараймастăп... Эпĕ вĕсене (папуассене), вĕсемшĕн хĕн-хур килсе тухсан, вĕсем патне пыма пултăм. Халĕ, çав вăхăт çитнине тата вĕсемшĕн пысăк хăрушлăх тухса тăнине пĕлсе (мĕншĕн тесен Англин колонизацийĕ папуассене пĕтерессине лайăх пĕлетĕп), эпĕ хамăн сăмаха пурнăçлас тетĕп тата пурнăçлатăп та».

Çулçўревçĕ хăйĕн пархатарлă шухăшне пурнăçа кĕртсе Çĕнĕ Гвинейăна таврăннă.

1883 çулта американец Мак-Ивер Çĕнĕ Гвинейăна экспедицие кайма хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ. Ку экспедицин вăрă-хурахла шухăшĕ Мак-Ивер утрав çине килекен кашни акционер-колонизатора 1.000-шер акр çĕр пама пулнинчен те лайăх курăнать. Н. Н. Миклухо-Маклай, çав вăхăтра Сиднейра пурăнса, общественность шухăш-кăмăлне организациleme пултарнипе пула, экспедици путланса ларнă.

Вырăссен аслă çулçўревçин ытти хăшпĕр çырăвĕсенче те вăл Англипе Америка колонизаторĕсене хирĕç тăтăшах кĕрешни çинчен калакан тĕслĕхсем нумай. Ку çырусене Н. Н. Миклухо-Маклайăн пĕтĕм сочиненийĕсен пуххин тăваттăмĕш томĕнче пĕрремĕш хут пичетлесе кăлараççĕ.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен 30-мĕш томĕ армян чĕлхипе пичетленсе тухнă

ЕРЕВАН. (ТАСС). Армян ССР-ĕнчи государство издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен 30-мĕш томне армян чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Ăна вырăсларан ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн Арменири филиалĕ куçарса хатĕрленĕ.

В. И. Ленинăн суйласа илнĕ произведенийĕсен икĕ томĕ пушкăртла пичетленсе тухнă

УФА. (ТАСС). Пушкăрт АССР государство издательстви В. И. Ленинăн суйласа илнĕ произведенийĕсен икĕ томне пушкăрт чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

„Падение Берлина“ кинокартинăна чăвашла куçарса кăларнă

Пĕтĕм совет халăхĕ юратакан совет кинокартинисене юлашки вăхăтра чăвашла куçарса кăларма тытăннă. Ку ĕçе Мускаври «Союзмультфильм» студийĕ йĕркелесе пырать. Нумай пулмасть пирĕн республикăри экрансем çинче «Ылтăн Çăлтăр Кавалерĕ» тата «Хăюллă çынсем» ятлă картинăсенчи геройсем чăвашла калаçма тытăнчĕç. Çак кунсенче «Падение Берлина» картинăна чăвашла куçарса кăларнă. Ку картина — совет кино-искусствин чи паха произведенийĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Паянхи номерте эпир «Берлина илни» кинокартина çинчен куракансем мĕн каланине пичетлетпĕр.

«Берлина илни» кинокартинăри кадр.

Хумханмасăр пăхма çук

«Берлина илни» фильма куракансем çав тери ăшă кăмăлпа пăхрĕç. Ку кинофильмра халăхсен çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин çинчен, вăл халăха мĕн тери çывăх пулни çинчен, гениллĕ полководец малашне мĕнлĕ пуласси́не витĕр курни çинчен, вăл совет халăхне çĕнтерӳ патне ертсе пыни çинчен тĕрĕс те ĕненмелле кăтартса панă. Кинора Сталин юлташ пирĕн тăван чĕлхепе — чăвашла калаçни куракансене савăнтарать. Ку картинăна чăвашла куçарас ĕçе хутшăннă Чăваш академи театрĕн артисчĕсене пархатарлă ĕç тунăшăн пысăк тав тумалла. Уйрăмах Сталин юлташ ролĕнчи А. Ургалкин тата Алексей Иванов ролĕнчи В. Родионов артистсем хăйсен пултарулăхне лайăх кăтартса панине палăрă тăвас килет.

Çак кинокартинăна пăхакансем пулса иртнĕ ĕçсене аса илеççĕ. Анчах та фильм иртни çинчен кăна кăтартса памасть, вăл малашлăх çине çирĕп шанса пăхма, хамăрăн телейлĕ Тăван çĕршыва чĕререн юратма вĕрентет. Вăл мĕнпур ĕççыннисене пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетессишĕн кĕрешме чĕнет.

Эпĕ — учительница. Пирĕн задача — ӳсекен çамрăк ăрăва хамăрăн Тăван çĕршыва юратма, коммунизм тăвассишĕн кĕрешекен паттăрсем пулма вĕрентсе ӳстересси пулать. «Берлина илни» кинофильма пăхакан çамрăксем хăйсен ашшĕсемпе пиччĕшĕсем Тăван çĕршывшăн хăюллă çапăçнине, большевиксен партийĕ ертсе пынипе ĕçпе кĕрешӳри йывăрлăхсене çĕнтерсе пынине кураççĕ. Кинокартина çамрăксене совет наукине тимлĕн тăрăшса вĕренме хавхалантарать, мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерме хатĕр тăракан, чăтăмлă та хăюллă çынсем пулма вĕрентет. Вăл картинăна пур çамрăксем те пысăк хаваслăхпа курĕç.

Т. АНДРЕЕВА,
учительница.

Муркаш районĕ,
Оринино ялĕ.

Чапла фильм

Совет искусстви — вăл шутра совет кино-искусстви — тĕнчери чи идейăллă, чи малта пыракан искусство пулса тăрать.

«Чапаев» фильмран (1932 ç.) пуçласа, совет кино-искусстви социализмла реализм çулĕ çине тăрса, çав пĕртен-пĕр тĕрĕс творчествăллă меслетпе аталанса пырать. Пирĕн кино-работниксем нумай паха произведенисем кăларчĕç. Вĕсем ӳкернĕ картинсем пĕтĕм тĕнчери кино-фестивальсенче ялан пĕрремĕш вырăнсене йышăнаççĕ, тĕнчери пур прогрессивлă кинодеятельсем вăл картинăсем тăрăх ĕç халăхĕшĕн усăллă фильмсем туса кăларма вĕренсе пыраççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче — Америкăра, Англире, Францире кино-искусство çĕнĕ вăрçă пуçласа ярассишĕн, тĕрлĕ трумэначесконсен çынçиенле ĕçĕсемпе ĕмĕчĕсене мухтавлать, миллионшар çынсене вĕлерсе, çĕр чăмăрне каллех юнпа хĕретме чĕнет. Вĕсен искусстви — этемлĕх тăшманĕ.

Пирĕн кино-искусство — халăхсен телейĕшĕн, вĕсен çутă ĕмĕчĕсене пурнăçласси шĕн кĕрешет. Пирĕн кинокартинăсем миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, вĕсен кăмăлĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, пур йышши агресси хирĕç, пĕрисем теприсене пусмăрлассине хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ, Тăван çĕршыва юратма вĕрентеççĕ, хамăр халăхăн паттăрлăхне, унăн хĕрӳ патриотизмне кăтартса параççĕ.

Çавăн пек картинăсем пирĕн çултан çул йышланса пыраççĕ. Вĕсенчен пĕри «Падение Берлина» ятлă икĕ серийлĕ картина.

Ку фильмăн анлăшне, унта кăтартнă событисен масштабне шута илсен, ăна чăннипех те историллĕ кино-эпопея теме пулать. Вăл совет халăхĕн вăрçăччен мирлĕ те телейлĕ пурнăçне кăтартнинчен пуçланса, хăватлă Совет Çарĕн паттăр воинĕсем Берлина çитсе ылханлă рейхстаг — Германи фашисчĕсен тĕп йăви çине Çĕнтерӳ Ялавĕ хăпартса лартнипе вĕçленет.

...Совет çыннисем нихçан та, никампа та, никама хирĕç те вăрçма шутламан. Вĕсем, ырă кăмăлпа пурăнса, хуçалăха çӳлтен çӳле çĕклеме тăрăшаççĕ, вăйлă тырпул тăваççĕ, хурçă шăратаççĕ, ачисем, телей юрри юрласа, шкулсенче вĕренеççĕ... Анчах сĕмсĕр тăшман сасартăк, хурахла тапăнсан, совет çыннисем пĕр харăс çĕкленсе, хăйсене пăхса ӳстернĕ амăшне — Тăван çĕршыва хӳтĕлеççĕ. Аслă çулпуç, гениллĕ полководец Иосиф Виссарионович Сталин ертсе пынипе Совет Çарĕ хамăрăн çĕршыва тăшманран тасатать, юлашкинчен ăна хăйĕн йăвинчех аркатса парăнтарать.

«Падение Берлина» — питĕ вăйлă, ĕнентерӳллĕ, историллĕ событисене тĕрĕс кăтартакан картина. Унăн кашни сыпăкĕ, кашни кадрĕ куракансене хумхантарать.

«Падение Берлина» — чăвашла куçарнă тăваттăмĕш картина. Çак питех те кирлĕ те усăллă ĕç малашне те ăнса пытăр!

Леонид АГАКОВ,
писатель.

Ĕçлеме тата кĕрешме хавхалантаракан картина

«Берлина илни» кинокартинăна эпĕ ĕнтĕ иккĕмĕш хут куртăм. Вăл картина яланах манăн чĕреме питех те пысăк вăй-хăват кĕртет. Ăна курнă хыççăн тата нумайрах пурăнас килет, хамăрăн Тăван çĕршывшăн тата лайăхрах ĕçлес килет. Ку картинăра пирĕн анлă çĕршывăн пысăк хăватне, иксĕлми хăватне кирек мĕнле кĕнекеринчен те аванрах, вăйлăрах кăтартса панă пек туйăнать. Çынсене, çĕршывăн чи хаклă пурлăхне тăвакан, çĕршыва илем кӳрекен çынсене, çак фильмра пысăк ăсталăхпа, питех те тĕрĕс ӳкерсе кăтартнă. Большевиксен партийĕ, Сталин юлташ воспитани парса ӳстернĕ совет çыннисем чăннипех те çавăн пек, вĕсем вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ, хăйсен телейĕшĕн хăюллăн, йывăрлăхсенчен хăрамасăр çапăçаççĕ.

Картинăри тĕп геройсенчен пĕри вăл Алексей Иванов — хурçă шăратакан. Анчах та кашни совет çынниех, вăл кирек мĕнле ĕçпе пурăнать пулин те, Алексей Иванов сăнарĕнче хăйĕн пурнăçне курать. Эпир пурте, революциччен тата революци хыççăн пурăнма тытăннисем те, Алексей Иванов пекех, Октябрь тантăшĕсем. Совет çыннисем хăйсен ирĕклĕхне Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе тупнă, хăйсен телейне тупнă. Эпир кашни, Алексей Иванов пек, хамăр тунă ĕçпе мухтанатпăр, ун пекех хамăрăн кӳлленхи ĕçе чунтан-чĕререн юрататпăр, тата хастарлăрах ĕçлеме тăрăшатпăр, пысăк ĕмĕтсемпе пурăнатпăр.

Фильмра çапăçу эпизочĕсене пысăк ăсталăхпа, питех те ĕненмелле ӳкерсе кăтартнă. Эпĕ хам та Аслă Отечественнăй вăрçăра пулнă, Сталинградра, Курскпа Харьков патĕнче, Днепр çинче çапăçнă. Картинăра пăхнă чухне кино курни çинчен манатăн, çапла шутлатăн: «Чăн, чăнах та çаплах пулнăччĕ». Ирĕксĕрех пулса иртнĕ ĕçсене паянхи пек аса илетĕн, фронтри юлташусене куç умĕнче куратăн... Вăрçă çулĕсенче эпир кашни, Алексей Иванов пек, хамăрăн мĕнпур вăя тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн панă: фронтрисем — алла пăшал тытса çапăçнă, тылра юлнисем — ĕçпе пулăшнă.

Çак фильмра малтан пуçласа вĕçне çитиех аслă Сталинăн çутă сăн-сăпачĕ курăнать. Аслă çулпуç халăхпа çывăх пулнине, вăл совет халăхне çĕнтерӳ патне ертсе пынине, унăн юратмалла ăшă кăмăлне, тарăн ăсне, унăн çирĕплĕхне аван сăнласа кăтартнă.

Фильм вĕçĕнче Иосиф Виссарионович Сталин халăха чĕнсе çапла калать: «Паянтан пуçласа ирĕклĕхе юратакан халăхсем умĕнче анлă çул уçăлать. Кашни халăх пĕтĕм тĕнчипех мир тăвассишĕн, мĕнпур çĕршывсенчи простой çынсен, мĕнпур халăхсен телейĕшĕн кĕрешме тивĕç».

Эпир лайăх пĕлетпĕр: пирĕн Тăван çĕршыв, пирĕн халăх-çĕнтерӳçĕ мĕн тери вăйлăрах, çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕ çавăн чухлĕ сахалрах пулать. Савăнпа та совет çыннисем вăрçă хыççăн нихçанхинчен хастарлăрах ĕçлеме тытăнчĕç, вĕсем пысăк хавхаланупа коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн колхоз членĕсем те общество хуçалăха вăйлатассишĕн, тырпул тата выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Эпир кăçал кашни гектартан 16-шар центнертан кая мар тĕштырă пухса кĕртме задача лартнă. Ăна пурнăçлас шутпа çуракине тăрăшса, тимлĕн хатĕрленетпĕр. Колхоз çĕнĕ çула вăрман хатĕрлес ĕçре пысăк çитĕнӳ тунипе кĕтсе илчĕ. Колхозниксем планра кăтартниччен ытларах йывăç касса хатĕрлерĕç, çул хĕррине турттарса кăларчĕç. Халĕ колхозниксем артель валли йывăç касса хатĕрлеççĕ. Эпир яххуçалăх культури сурчĕ, çĕнĕ выльăх-чĕрлĕх витисем туса лартма шутлатпăр.

П. КИСЕЛЕВ,
Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз агрономĕ.

Пирĕн савăнăç

«Берлина илни» фильма пăхнă чухне партипе правительство, аслă Сталин совет халăхĕн ырлăхĕшĕн, унăн культуришĕн кулленех тăрăшнине тепĕр хут уççăн куратăн.

...Кинофильмра вăрçă умĕнхи картинăсем шуса иртеççĕ. Телейлĕ те савăнăçлă пурăннă совет халăхĕ. Çак пурнăçа юнлă Гитлер пĕтерме шутланă. Анчах фашистсен ирсĕр ĕмĕчĕ пăчланчĕ. Чăвашсем: «Пуйма каякан вилсе килнĕ», теççĕ. Нимĕç захватчикĕсене те çак шăпа тиврĕ.

Паттăр совет халăхĕ вăрçă суранĕсене хăвăрттăн юсаса пырать. Çĕнĕ хуласемпе ялсем ӳссе лараççĕ.

Пурнăç ырă та савăнăçлă. Паянхи пурнăç лайăх, ыранхи — тата лайăхрах пулĕ.

«Берлина илни» кинофильма курнă чухне паттăр совет халăхĕн иксĕлми вăйне курса чăннипех те савăнатăн. Чĕре те савăнăçлăрах тапма пуçлать. Тăван çĕршыва, аслă Сталина вĕçĕмсĕр мухтас килет, вĕсем çинчен чи лайăх юрă-сăвăсем кĕвĕлес килет.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Чĕререн савăнтаракан ĕç

«Берлина илни» — фильм 2 серирен тăрать. Вăл совет кино-искусствин ылтăн фондне кĕрекен паха фильм. «Берлина илни» фильмран совет халăхĕ Отечественнăй вăрçă çулĕсенче туса ирттернĕ героикăллă пысăк ĕçсем курăнаççĕ. Фильм Аслă Сталин гениллĕ ертсе пынипе совет çарĕ хăватлă çĕнтерӳ тунине кăтартса парать.

Чаплă фильма чăвашла куçарса кăларни совет кино-искусствин нумай енлĕ ӳсĕмĕсенчен пĕри пулса тăрать. Фильм совет халăхĕ тунă чаплă çĕнтерӳсене чĕрĕ картинăсемпе кăтартса, вĕсем çинчен тăван чĕлхепе каласа парать. Ку вăл кино куракансене çак фильм çинчен нумайччен астуса пурăнма тата вĕсене совет халăхĕн никам та çĕнтерейми хăватлă вăйне ĕненсе паттăрланма пулăшать.

Фильмри вырăсла калаçу сăмахĕсене чăвашла куçарса калакансем Чăвашсен государство академи театрĕн артисчĕсем — хăйсен ĕçне ятламалла мар тунă темелле. Уйрăмăнах фильмăн 2-мĕш серине аван куçарнă. Сталин рольне вылякан Геловани артист сăмахĕсене чăвашсен халăх артисчĕ Ургалкин, Иванов рабочи сăмахĕсене артист В. Родионов чăвашла лайăх каласа параççĕ. Çавăн пекех РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев, ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем Е. Шорникова, Л. Семенов та фильмра вылякансен сăмахĕсене чăвашла лайăх калаççĕ.

Анчах та çак хушăрах чăвашла куçарнă фильм пĕр çитменлĕхсĕр те кăлтăксăр тухнă темелле мар. Хăшпĕр артистсен сăмахĕсем уйрăм вырăнсенче ăнланмаллах мар илтĕнеççĕ. Тепĕр çитменлĕх тата — экран çинчи çынсен хусканăвĕпе вĕсен сассисем хăш чух пĕр-пĕрне таччăн сыхăнса тăрайманни пулать. Малашне çавăн пек кăлтăксем ан пулччăр тесен, фильмсенчи вырăсларан куçарнă сăмахсене, вĕсене пленка çине çыриччен малтан, пур енчен те (уçă, хупă сасă енчен, ударени енчен, вăрăмăшĕ енчен) вырăсла оригинал-сăмахĕпе лайăххах виççе, танлаштарса пăхмалла. Çакăн пек туса, хальхи фильмра палăрнă кăлтăксенчен чылаях хăтăлма май пур пек туйăнать.

Кунта кăтартнă вак çитменлĕхсем чăвашла куçарнă фильмăн пысăк хакне чакарма пултараймаççĕ. «Берлина илни» ятлă художествăллă паха фильма чăвашла куçарса кăларни — пирĕншĕн чĕререн савăнтаракан ĕç пулса тăрать.

С. ЭЛЬГЕР,
Чăваш АССР халăх поэчĕ.

Тăван çĕршыва юратма вĕрентекен фильм

«Берлина илни» кинокартинăна эпир пысăк хаваслăхпа пăхрăмăр. Совет халăхĕ аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă çĕнтерӳсем çинчен калакан чаплă фильма вырăсларан чăвашла куçарни колхозниксене питех те килĕшрĕ. Вырăсла калаçакан кинокартинăсене курнă чухне ялти çынсенчен чылайăшĕ, уйрăмах хĕрарăмсем, пурне те ăнланса юлаймаççĕ, пĕр-пĕринчен ыйтса лараççĕ. Чăвашла калаçакан кинокартинăри кашни сăмахах пуриншĕн те ăнланмалла.

Çак фильма хумханмасăр пăхма çук. Ăна курнă чух Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтне ирĕксĕрех тепĕр хут аса илетĕн. Фашистсен тискер çарĕсене Мускавпа Сталинград патĕнче çапса çĕмĕрме, вĕсене чикĕ леш енне хăваласа кайма, тăшмана хăйĕн йăвинче — Берлинра — çапса çĕмĕрме сăмăл пулман. Эпĕ хам та ку вăрçăра виçĕ хутчен амантăм. Анчах та совет салтакĕсем пур йывăрлăхсене те çĕнтерчĕç. Вĕсем тĕрĕслĕх çĕнтерессине çирĕп ĕненсе тăнă, вĕсене çĕнтерӳсем тума чаплăран чаплă полководец Сталин çул кăтартса пыни хавхалантарнă.

Кинокартинăра Германи столицине илессишĕн пынă çапăçăва кăтартса паракан вырăнсем маншăн уйрăмах çывăх. Эпĕ хам та Берлина илессишĕн çапăçнă. Фильма пăхнă чух темиçе çул каярах пулса иртнĕ ĕçсем, ĕмĕр манмалла мар кунсем манăн куç умне çĕнĕрен тухса тăчĕç.

Салтаксем рейхстага штурмланине — пĕтекен гитлерла çарăн юлашки тĕрекĕ патне çапăçса пырса кĕнине курсан, мĕн тери хумханатăн. Совет салтакĕсен паттăрлăхне манма çук. Юсупов хăйĕн юлташĕн юнĕпе хĕрелнĕ тутăра ялав пек малалла çĕклесе пырать... Çĕнтерӳ хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшме тытăнать. Берлин парăнать. Халăх хăйĕн çулпуçне Сталин юлташа хаваслăн та савăнăçлăн саламлать...

Эпир вырăсла калаçакан паха кинокартинăсене малашне те чăвашла куçарма ыйтатпăр. Уйрăмах колхоз пурнăçне кăтартса паракан фильмсене чăвашла куçарасса шанатпăр.

А. ХОРЬКОВ,
Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри бригадир.

Колхоз клубĕнче

«Красное Сормово» колхозăн клубĕ пысăк, анчах та кĕçĕр ниçта та пушă вырăн çук. Ялта паян кино пуласси çинчен радиопа пĕлтерсенех, колхозниксем пĕрин хыççăн тепри клуба пухăнма тытăнчĕç.

Ваттисем те, çамрăккисем те, пурте «Берлина илни» ятлă чăвашла калаçакан кинокартинăна курмасăр юласшăн мар.

Фильм вăрçăччехи тапхăрта пулса иртнĕ ĕçсенчен пуçланать. Заводсенче хĕрӳ ĕç пырать, совет çыннисем хавхаланса, пысăк савăнăçпа ĕçлеççĕ. Хирте тырпул тинĕс пек хумханать. Чечекленекен çĕр çинче хаваслă юрă янăрать.

Малта, экран çывăхĕнче ларакан пĕчĕк ачасемшĕн ку ĕнтĕ — истори, вĕсем вăрçă умĕнхи çулсене астумаççĕ. Анчах та залра ларакансенчен нумайăшĕ хăйсен кун-çулне аса илеççĕ, фильмри геройсен сăнарĕнче хăйсен пурнăçне кураççĕ.

Заводра ĕçлекен Алексей Иванов хурçă шăратас ĕçре тĕнчипе паллă рекорд тăвать. Çамрăк стахановец ĕçлекен завода орденпа наградăланă. Рабочисен клубĕнче савăнăçлă каç. Трибуна çинче — учительница Наташа Румянцева. Вăл Сталин саманинче, чаплă вăхăтра пурăнни — пысăк телей пулни çинчен калать.

Аслă Сталин совет халăхне телейлĕ те савăнăçлă пурнăç патне илсе çитерчĕ. Пирĕн Тăван çĕршыв тунă кашни çитĕнӳ унăн ячĕпе çыхăнса тăрать.

Хĕвеллĕ, янкăр уяр кун. Сад. Кайăксем юрлаççĕ. Çав тери илемлĕ. Сталин юлташ садра çамрăк йывăç лартать.

Сталин юлташ хурçă шăратакан Алексей Ивановпа тĕл пулать. Çак тĕлпулу яланлăха аса юлать. Кино куракан хăйне Иванов вырăнне хурса шутлать. Çавăнпа Иванов хумханни, малтанах çулпуç умĕнче именни залра ларакансене те чĕререн хумхантарать. Çак тĕлпулура Сталин юлташăн ырă кăмăлне, вăл простой ĕççынни çине мĕн тери ăшă кăмăлпа пăхнине туятăн. Ун умĕнче Алексей Иванов хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене уççăн каласа парать. Вăл хăйĕн юратнă хĕрĕ çинчен те каласа кăтартать.

Тулли таса ĕмĕтсемпе Мускавран таврăннă çамрăк рабочи Сталинпа тĕл пулни çинчен Наташăна каласа парать. Пурнăç çав тери телейлĕ пулнăшăн вĕсем иккĕшĕ те хытă савăнаççĕ.

Анчах та кăн-кăвак тӳпере кĕтмен çĕртен тăшман самолечĕсем курăнса каяççĕ. Вĕсем мирлĕ, чечекленекен çĕршыв çине бомбăсем пăрахаççĕ, заводсемпе ялсене ишĕлтереççĕ. Вăрçă пуçланать.

Хурçă шăратнă çĕрте хастарлă ĕçлекен çамрăк алла пăшал тытать, хăйĕн тăван çĕршывне гитлерла захватчиксенчен хӳтĕлессишĕн, ăна ирĕке кăларассишĕн паттăррăн çапăçма тытăнать. Наташа пусмăрлăха лекет, ăна Германие хăваласа каяççĕ.

Кино пăхакансем хушшинче вăрăмăн сывласа илни, темĕн каласни илтĕнет. Кашни çын хăй тӳссе ирттернĕ йывăр кунсене аса илет. Ирсĕр нимĕç оккупанчĕсем пирĕн ешĕрекен мирлĕ хуласемпе ялсене ишĕлтерсе аркатнине, ним айăпсăр совет çыннисене тискеррĕн асаплантарнине курсан, кашниех чунтан тарăхать.

Совет халăхĕ вăрçăра çав тери йывăр хĕн-хур тӳссе ирттерчĕ. Анчах та совет çыннисем яланах аслă çулпуçа чĕререн шанса тăнă. Сталин юлташ ертсе пыни, вăл мĕн пуласси́не витĕр курса тăни, унăн çирĕп ирĕкĕ халăха Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме хавхалантарнă, вăй кĕртсе тăнă.

1942 çул. Тăшман çарĕсем Мускав патĕнче. Гитлер вĕçкĕнленсе: «Коммунизма яланлăхах тĕп тăватпăр», тесе сухăрашать. Анчах вăл йăнăшать.

Ленин ялавĕ айĕнче, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ çул кăтартса пынипе совет халăхĕ вăрçăра çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвать. Эпир Мускав патĕнче Гитлерăн аркатса тăкнă çарĕсен юлашкийĕсене куратпăр. Пирĕн куç умне Сталинград патĕнчи историллĕ çапăçусене кăтартакан картинăсем тухса тăраççĕ. Совет çынни Алексей Иванов паттăрла çапăçнине кашниех хумханса пăхать.

Халĕ клубра ларакансенчен те чылайăшĕ ун чухне çавăн пекех çапăçнă. Вĕсем фронтри кунсене, хăйсем хутшăннă çапăçусене аса илеççĕ.

Яла юлнă колхозниксемпе колхозницăсем те çĕнтерӳшĕн ырми-канми ĕçленĕ. Салтаксем тăшмана тупăсемпе, самолетсемпе, танксемпе çĕмĕрнĕ пекех, колхоз ĕçченĕсем хăйсем çитĕнтернĕ тырпулпа тăшман çарĕсене аркатса тăкма пулăшнă. Çавăнпа та кашниех халĕ хăйне Алексей Иванов вырăнĕнче туять, унăн хуйхишĕн кулянать, унăн савăнăçĕпе савăнать.

Фильмăн иккĕмĕш пайĕнче Берлина илессишĕн кĕрешнине, гитлеризма пĕтĕмпех çĕнтерсине питех те уççăн кăтартса панă. Çак кĕрешӳве чаплăран та чаплă полководец Сталин юлташ ертсе пырать, вăл çĕнтерӳ тума хавхалантарать.

Эпир Сталинград патĕнчен пуçласа Берлина çитиччченех çапăçса пынă Алексей Ивановпа унăн вăрçăри юлташĕсем паттăрла çапăçнине хумханса пăхатпăр.

Акă, экран çинче урса кайнă Гитлерăн йĕрĕнмелле сăн-сăпачĕ тухса тăрать. Залра темиçе çĕрте тарăхса:

— Ы-ых... çакă вăл, ылханлăскер...— тени илтĕнет.

Тахçан Мускава илесси çинчен сухăракан фюрер, халăхсен ылханăвĕнчен сехĕрленсе, совет салтакĕсем Берлинра çапăçнă вăхăтра йытă вилĕмĕпе — наркăмăш çисе вилет.

Хальхи вăхăтра Уолл-стрит империалисчĕсем пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тапăнма хатĕрленеççĕ, атом бомбипе юнама пăхаççĕ. Кино куракансем çапла шутлаççĕ: пирĕн Тăван çĕршыва тапăнма ĕмĕтленекен империалистсем каппайчăк Гитлер мĕнле пĕтнине асра тытчăр!

Совет салтакĕсем гитлерла çарăн юлашки тĕрекĕ — рейхстаг патне çапăçса пырса кĕреççĕ. Паракнă Берлин çинче çĕнтерӳ ялавĕ вĕлкĕшет.

Çĕнтерӳ! Рейхстаг умĕнчи площадьре совет салтакĕсем телейлĕн хĕпĕртесе савăнаççĕ. Берлинра совет воинĕсем Иосиф Виссарионович Сталинпа тĕл пулаççĕ. Халăх хăйĕн çулпуçне савăнăçлăн саламлать. Фашистла пусмăртан ирĕке тухнă мĕнпур халăх çыннисем те хăйсене ирĕке кăларакана — Аслă Сталина, Совет Çарне мухтаса ырлаççĕ.

Юратнă Тăван çĕршыв чысĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăрла çапăçнă çынсем хушшинче вăрçăччен хурçă шăратакан пулнă Алексей Иванов сержанта куратпăр. Вăл çавăнтах, гитлерла концентраци лагерĕнчен ирĕке кăларнă çынсем хушшинче, хăй юратнă хĕрне — Наташăна тĕл пулать. Вĕсем иккĕшĕ те телейлĕн мала, Сталин юлташ умне тухса тăраççĕ.

Аслă Сталин халăха малашлăхшăн мирлĕ пурнăçа сыхлама чĕнсе сăмах калать.

— Мирне телей сунатăп сире, тăванăмсем!— тет вăл.

Юлашки сценăра Сталин юлташа чунтан тав тăвакан совет çыннисен тата ирĕке тухнă çĕршывсенчи халăхсен шухăш-кăмăлне питех те лайăх кăтартса панă.

С. ДАНИЛОВ.

Муркаш районĕ.

«Берлина илни» кинокартинăри кадр.

Совет Правительстви США Правительствине панӑ нота

Совет Правительстви хӑйӗн 1951 ҫулхи ноябрӗн 21-мӗшӗнче США Правительствине панӑ нотинче США-ра «Хӑрушсӑрлӑха пӗрле хӳтӗлесси ҫинчен калакан 1951 ҫулхи закона» йышӑннине, ҫав Совет Союзне хирӗҫле сӑтӑрла тата диверсиллӗ ӗҫсем тума палӑртакан закона йышӑннине хирӗҫ протестленӗччӗ. СССР Правительстви хӑйӗн нотинче: асӑннӑ закона пӑрахӑҫлама США Правительстви тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнассине кӗтет, тесе каланӑччӗ.

1951 ҫулхи декабрӗн 19-мӗшӗнче США Правительстви Совет Правительствине ответлӑ нота панӑ. Америка Правительстви фактсене хирӗҫ пырса, ҫав закон агрессиллӗ шухӑшлӑ пулнине йышӑнмасть, ӑна хӳтӗлет.

Январӗн 9-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви, Совет Правительстви хушнипе, США-н Мускаври Посольстви урлӑ, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствине ҫакӑн пек нота ярса панӑ:

«США Правительстви 1951 ҫулхи декабрӗн 19-мӗшӗнче панӑ нота пирки Совет Правительстви ҫапла калама кирлӗ тесе шутлать: США-ра 1951 ҫулхи ноябрӗн 10-мӗшӗнче хӑрушсӑрлӑха пӗрле хӳтӗлесси ҫинчен калакан закон тенӗскерне йышӑннӑ пирки Совет Правительстви ноябрӗн 21-мӗшӗнче янӑ нотӑна хирӗҫ Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви панӑ ответа СССР Правительстви ҫителӗклӗ тесе йышӑнма пултараймасть.

Пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ, ҫав законра «Совет Союзӗнче, Польшӑра, Чехословакире, Болгарире, Венгрире, Румынире, Албанире... пурӑнакан, юри суйласа илнӗ кирек мӗнле ҫынсене те е тата ҫав ҫӗршывсенчен тарнӑ ҫынсене те укҫа парса тӑма, вӗсене Ҫурҫӗр Атлантика договорӗ тӑрӑх тунӑ организаци майлӑ тӑракан кирек мӗнле хӗҫпӑшаллӑ чаҫсене те пӗрлештерме тата ытти тӗллевсем валли» укҫа парса тӑма 100 миллион доллар уйӑрма палӑртнӑ.

Ҫапла вара, США-ра 1951 ҫулхи октябрӗн 10-мӗшӗнче йышӑннӑ закон тата ку закон тӑрӑх укҫа уйӑрса памалла туни совет территорийӗнче пурӑнакан е ССР Союзӗнчен тарнӑ «юри суйласа илнӗ кирек мӗнле ҫынсенчен» СССР территорийӗнче те, ҫавӑн пекех унӑн тулашӗнче те, «хӗҫпӑшаллӑ чаҫсем» тума, ҫав ҫынсемпе тата хӗҫпӑшаллӑ ушкӑнсемпе ССР Союзне хирӗҫле ӗҫсем тунӑ ҫӗрте усӑ курма палӑртаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл США-н халӗ асӑннӑ законне СССР территорийӗнче сӑтӑрла, диверсиллӗ тата террорла ӗҫсем тума вӑрттӑн ӗҫлекен бандӑсем пухас тата Совет Союзне хирӗҫ преступникла ӗҫсем тума ССР Союзӗнчен тарнӑ тӗрлӗ йышши сутӑнчӑксемпе усӑ курас тӗллевпе йышӑннине пӗлтерет.

США-н асӑннӑ законӗ тӑрӑх тума палӑртнӑ ӗҫсен тӗллевӗсем шӑпах та ҫавӑн пек пулнине ку закона хатӗрленӗ авторсенчен пӗри—Америка конгресӗн членӗ Керстен каласа пани ҫирӗплетет. Вӑл 1951 ҫулхи октябрӗн 20-мӗшӗнче представительсен палатинче сӑмах тухса каланӑ. Асӑннӑ законра «Пӗрлешӳллӗ Штатсем коммунистла ҫӗршывсенче вӑрттӑн ӗҫлекенсен юхӑмӗсене мӗнле майпа пулӑшмалли меслетсене палӑртнӑ. Ку шухӑш эпӗ представительсен палатинче сӗннӗ тӳрлетӳре пур, ҫав сӗнӗве палата йышӑнчӗ», тесе Керстен уҫҫӑнах каланӑ.

США Правительстви 1951 ҫулхи декабрӗн 19-мӗшӗнче нота панӑ май Совет Правительстви Совет Союзӗпе Америка пӗр-пӗрин хушшинче 1933 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнче тунӑ килӗшӳ тӑрӑх Пӗрлешӳллӗ Штатсем хӑйсем ҫине мӗнле обязательствӑсем илни ҫинчен Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствине тепӗр хут асӑрхаттарма кирлӗ тесе шутлать.

Ҫав килӗшӳ тӑрӑх Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Совет Союзӗн пӗр-пӗрин шалти ӗҫӗсене хутшӑнмалла мар, пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлакан ҫӗршывсене хирӗҫ хӗҫпӑшаллӑ интервенцие хавхалантарма, интервенци тӑвас ӗҫре пулӑшма тата ку ҫӗршывсен политикӑпа социальнӑй стройне вӑйпа улӑштарма кирек мӗнле ӗҫ тӑвассинчен те тытӑнса тӑмалла. Ҫав килӗшӳре пӗр-пӗрин хушшинче правительство организацийӗсене тата правительствӑран укҫа енӗпе пулӑшу илекен организацисене ҫӳлте асӑннӑ пек ӗҫсем тума чарасси ҫинчен сӑмах панӑ. Ҫав килӗшӳре Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Совет Союзӗ хӑйсен территорийӗсенче ҫӳлте асӑннӑ тӗллевсене тытнӑ кирек мӗнле организацисемпе ушкӑнсене те, ҫав шутра тепӗр енне хирӗҫ «хӗҫпӑшалпа кӗрешес тӗллев тытнӑ ҫар организацийӗсемпе ушкӑнсене те» тума чарасси ҫинчен, вӗсене тытса усрас марри, укҫа парса пулӑшас марри ҫинчен каланӑ. Кунсӑр пуҫне Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствипе СССР Правительстви асӑннӑ килӗшӳре пӗр-пӗрне «ҫавӑн пек организацисемпе ушкӑнсем тума кирек мӗнле майпа ҫынсем пухни ҫинчен те асӑрхаттарса тӑма» сӑмах панӑ.

1951 ҫулхи октябрӗн 10-мӗшӗнчи закона йышӑннинчен ҫакӑ курӑнать: Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви, Совет Союзӗпе Америка пӗр-пӗрин хушшинче 1933 ҫулта тунӑ килӗшӗве пӑсса, Совет Союзне хирӗҫ сӑтӑрла, шпионла тата диверсиллӗ ӗҫсем тӑвакан вӑрттӑн бандӑсем пухас тата ҫав бандӑсемпе преступникла ӗҫсем тӑвакансене укҫа парса пулӑшас тӗллев тытать. США ҫавӑн пек ӗҫсем туни вӑл Совет Союзӗн шалти ӗҫӗсене сӗмсӗррӗн хутшӑнни пулать. США ҫавӑн пек ӗҫсем тунинчен Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви Совет Союзӗпе Америка пӗр-пӗрин хушшинче 1933 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнче тунӑ килӗшӳ тӑрӑх хӑйӗн ҫине илнӗ обязательствӑсене нимӗн те хисеплеменни курӑнать.

США Правительстви октябрӗн 10-мӗшӗнчи закона йышӑнни вӑл государствӑсем хушшинче халиччен нихҫан пулман киревсӗр ӗҫ, ҫӗршывсен тӗнчери прависен нормисене питӗ киревсӗррӗн пӑсни пулса тӑрать, ҫакӑ вӑл ҫӗршывсем пӗр-пӗринпе йӗркеллӗ ҫыхӑну тытассипе пачах та килӗшсе тӑмасть. Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫавӑн пек закон йышӑннине США-па Совет Союзӗ хушшинчи ҫыхӑнусене тата ытларах начарлатас, тӗнчери лару-тӑрӑва тата ытларах ҫивӗчлетес шутпа тунӑ агрессиллӗ ӗҫ тесе хакламалла, ӑна урӑхла хак пама ҫук. Тара тытнӑ агентсен вӑрттӑн ӗҫлекен бандисене туса ытти государствӑсен шалти ӗҫӗсене сӗмсӗррӗн хутшӑнни тата преступниксемпе ытти государствӑсен территорийӗсенче диверсилле-террорла ӗҫсем тума усӑ курни ҫӗршыва «хӳтӗлес» тӗллевсемпе, «Европӑра ирӗклӗх тӑвас» интерессемпе нимӗн чухлӗ те ҫыхӑнса тӑмасть. США Правительстви хӑйӗн декабрӗн 19-мӗшӗнчи нотинче вара ҫав сӑлтавсене кӑларса тӑратать.

Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви хӑйӗн ответӗнче Пӗрлешӳллӗ Штатсем йышӑннӑ законра Совет Союзӗпе ытти государствӑсен территорийӗсенчи преступниксене тата вӑрттӑн ӗҫлекен ушкӑнсене ҫав ҫӗршывсенче сӑтӑрла тата диверсиллӗ ӗҫсем тума укҫа пама тата хӗҫпӑшаллантарма палӑртни ҫинчен ӑнсӑртран мар ӗнтӗ нимӗн те каламасть. США Правительстви ҫакӑн пирки мӗншӗн нимӗн те каламаннине лайӑх ӑнланса илме пулать: 1951 ҫулхи октябрӗн 10-мӗшӗнчи законра асӑннӑ ӗҫсене тума йышӑнни США Правительстви Совет Союзӗн шалти ӗҫӗсене тӳрремӗнех хутшӑнни пулать, США Правительстви хӑй мир тӑшманӗ пулнине, вӑл хӑй ҫине илнӗ обязательствӑсене пӑснине, вӑл государствӑсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑну тытас ӗҫре тӗнчери правӑсен пурте йышӑннӑ нормӑсене нимӗн те хисеплеменнине тӑрӑ шыв ҫине кӑларать, ҫавӑнпа та США Правительстви ун пирки нимӗн те шарламасть.

Совет Правительстви 1951 ҫулхи ноябрӗн 21-мӗшӗнчи нотӑра каласа панисене, нимӗнле те тавлашма ҫук шухӑшсене США Правительстви сирсе яма пултараймасть. США Правительстви хӑй ответлесе ҫырнӑ нотӑра Совет Союзӗ ҫинчен элеклеме, Совет Союзӗ США-па ытти государствӑсене хирӗҫ сӑтӑрла ӗҫсем тума темӗнле «пулӑшу пани» ҫинчен юриех суя сӑмах шухӑшласа кӑларать. Ҫавӑн пек суя сӑмахсене общественность шухӑшне никам сирсе яма пултарайман фактсенчен, Совет Союзне тата халӑх демократи государствисене хирӗҫ диверсилле-террорла ӗҫсем тума вӑрттӑн ӗҫлекен бандӑсем организацилекенсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларакан фактсенчен, пӑрса ярас шутпа шухӑшласа кӑларни уҫҫӑнах курӑнать. Юри шухӑшласа кӑларнӑ ҫавӑн пек суя сӑмахсене Совет Правительстви пӗтӗмпех сирсе ярать.

Пӗрлешӳллӗ Штатсем 1951 ҫулхи октябрӗн 10-мӗшӗнчи закона йышӑнни ҫӗршывсен тӗнчери прависен нормисене нихҫанхинчен те ытларах пӑсни тата Совет Союзӗпе Америка пӗр-пӗрин хушшинче 1933 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнче тунӑ килӗшӗве сӗмсӗррӗн пӑсни пулнине, ССР Союзне хирӗҫ тунӑ агрессиллӗ ӗҫ пулнине шута илсе, Совет Правительстви ҫавӑн пек ӗҫсемшӗн пӗтӗмпе США Правительстви ответлӑ пулса тӑни ҫинчен тепӗр хут калама кирлӗ тесе шутлать, асӑннӑ закона пӑрахӑҫлама сӗнет.

Ҫӗнӗ кӗнекесем

Чӑваш АССР государство издательстви юлашки вӑхӑтра ҫакӑн пек кӗнекесем чӑвашла пичетлесе кӑларнӑ:

Г. Х. Андерсен. Юмахсем. Вырӑсларан Н. Степанов куҫарнӑ. Кӗнеке хуплашкине тата шалти картинкисене М. Михаэлис художник тунӑ. Кӗнекере 128 стр., тиражӗ—3.000 экз., хакӗ—3 тенкӗ.

К. Золотовский. Шыв айӗнчи салтаксем. И. Сапожников куҫарнӑ. Кӗнекене нумай картинӑсемпе илемлетнӗ. Кӗнекере 112 стр., тиражӗ—3.000 экз., хакӗ—2 тен. 50 пус.

А. Куприн. Шурӑ йытӑ. Г. Алендей куҫарнӑ. Кӗнекере 46 стр., тиражӗ—3.000 экз., хакӗ—1 тенкӗ.

Е. Чарушин. Мӗкӗтепе унӑн тусӗсем. А. Краснов куҫарнӑ. Кӗнеке хуплашкине Л. Осинский художник тунӑ. Кӗнекере 44 стр., тиражӗ 3.000 экз., хакӗ—1 тен. 20 пус.

Кӗнекесене кӗҫӗн ҫулхи ачасемпе вӑтам ҫулхи ачасем валли кӑларнӑ. Вӗсем пурте пӗр форматпа тухнӑ. Ку кӗнекесене Чӑвашкниготоргӑн пур магазинӗсенче те илме пулать.

ООН Генеральнӑй Ассамблейин улттӑмӗш сессийӗ

ООН Генеральнӑй Ассамблейин пӗрлехи ларӑвӗ

ПАРИЖ, январӗн 11-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Паян кӑнтӑрла ООН Генеральнӑй Ассамблейин улттӑмӗш сессийӗн черетри пӗрлехи ларӑвӗ пулнӑ. Ассамблея председателӗ Нерво пӗрлехи ларура пӑхса тухма 9 ыйту тӑратни, вӗсене малтан тӗрлӗ комитетсенче сӳтсе явни ҫинчен пӗлтернӗ. Вӑл ыйтусене пӑхса тухмалли йӗркесем тӑрӑх комитетсенче йышӑннӑ тата пӗрлехи ларура ҫирӗплетме тӑратнӑ резолюцисене сӳтсе явма делегацисен виҫҫӗмӗш пайӗ ыйтмасть пулсан, вӗсене сӳтсе явмалла мар, тесе каланӑ. Пур делегатсен те ку е тепӗр резолюцишӗн мӗншӗн сасӑлани тата мӗншӗн сасӑлама килӗшменни ҫинчен 7 минут хушши сӑмах калама право пур, тенӗ вӑл.

Америкӑн васкасах нумай хӗҫпӑшал хатӗрлемелли планне тӑрӑ шыв ҫине кӑларни

Чи малтан Ассамблейӑра пӑхса тухма «Мӗнпур хӗҫпӑшаллӑ вӑйсемпе хӗҫпӑшалсене йӗркелесси, вӗсем мӗн чухлӗ пулмаллине палӑртасси тата вӗсене пӗр пек шайра чакарса пырасси» текен резолюцие тӑратнӑ. Ҫав питех те каппайланса тата суя ят панӑ резолюцие сессире пӑхса тухма США, Великобритани тата Франци делегацийӗсем тӑратнӑ, ӑна Политика комитетӗнче нумаййӗн сӳтсе явнӑ. Дискусси пынӑ вӑхӑтра Совет Союзӗн делегацийӗ тата ытти чылай ҫӗршывсен представителӗсем ҫав резолюци унта каланӑ тӗллевсене пурнӑҫлама май паманнине, унта атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартма, хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшалсене чакарма, ҫав задачӑсене пурнӑҫланине контроль тума палӑртманнине, ҫапла вара унта мире сыхласа хӑварас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан задачӑсене татса пама палӑртманнине кӑтартса панӑ. Резолюци авторӗсем, хӑйсене пӑхӑнса тӑракан делегацисем пулӑшнипе, Политика комитетӗнче ҫав резолюцие йышӑнтарнӑ. Ҫапах та вӗсем хӑйсен умне лартнӑ тӗп задачӑна—США-па Атлантика блокӗнчи ҫӗршывсем мире юратакан ҫӗршывсем пулнӑ пек кӑтартассине пурнӑҫлама пултарайман. Политика комитетӗнче делегацисен виҫҫӗмӗш пайӗ ҫав резолюцие йышӑнма килӗшмен.

Паянхи пӗрлехи ларура Англипе Америка блокӗ ку резолюци пирки прени пуҫлас марри ҫинчен решени йышӑнтарнӑ. Ҫапах та чылай делегатсем мӗншӗн ҫав резолюцишӗн сасӑланипе сасӑламанни ҫинчен сӑмах тухса каланӑ.

Чылай делегатсем ҫав резолюци вӑл США, Англи тата Франци хӗҫпӑшалсене шута илсе тухасси ҫинчен калаҫнипе хӑйсен агрессиллӗ тӗллевӗсене пурнӑҫлама васкасах хӗҫпӑшал нумай хатӗрленипе пытарса тӑма тӑрӑшни пулать, тенӗ.

Египет делегачӗ хӑйӗн сӑмахӗнче СССР делегацийӗ Политика комитетӗнче виҫӗ держава резолюцине тӳрлетӳсем кӗртме сӗнни ҫинчен аса илтернӗ. (Англипе Америка блокӗ ҫав тӳрлетӳсене йышӑнассине хирӗҫ сасӑланӑ, ҫавӑн пирки вӗсене йышӑнман). Унтан Египет делегачӗ: ҫав икӗ тӗслӗ сӗнӳсенче цӗр-пӗрне хирӗҫле икӗ ҫул-йӗр палӑрчӗ, тенӗ. Ку чӑнах та ҫапла ӗнтӗ, мӗншӗн тесен, Совет делегацийӗ сӗннӗ тӳрлетӳсем виҫӗ держава сӗнӗвӗсенчен пачах урӑхла, вӗсене хирӗҫле. Совет делегацийӗн тӳрлетӗвӗсенче атомлӑ хӗҫпӑшала чӑннипех чарса лартма, пӗр ҫулталӑк хушшинче пилӗк аслӑ державӑн хӗҫпӑшалӗсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене виҫҫӗмӗш пайӗ чухлӗ чакарма тата ҫав ӗҫсене пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑма ҫирӗп контроль тума палӑртнӑ. Египет делегачӗ, хӑй Совет Союзӗ майлӑ тӑракан лагерь ҫумне те, хӗвеланӑҫӗнчи державӑсен лагерӗ ҫумне те пӗрлешменни ҫинчен уйрӑмах асӑрхаттарса, ҫапла каланӑ: эпӗ Америка резолюцийӗшӗн сасӑлама пултараймастӑп, унта атомлӑ хӗҫпӑшала тата халӑха йышлӑн пӗтермелли ытти йышши хӗҫпӑшала чарса лартассине тахҫан, нумай вӑхӑт иртсен тин, тумалли ӗҫ тесе шутланӑ. Америка хӗҫпӑшалсене тапхӑрӑн-тапхӑрӑн шута илсе тухас пирки панӑ сӗнӳ вара рак чирне сиплеме сунас чирне сиплеме пуҫланипе тытӑнмалла тенӗ пекех пулса тухать. Оратор, хӑй Политика комитетӗнче каланӑ пекех, тепӗр хут ҫакна палӑртнӑ: атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасси вӑл пӗр тӑхтаса тӑмасӑр тумалли ӗҫ, пурнӑҫа кӗртме май килекен задача пулса тӑрать, ҫавна тума малтан контроль туса хумалли пысӑк ыйтӑва татса пани кирлӗ мар. Хӑй вӑхӑтӗнче ҫынна вӗлерекен газсемпе усӑ курма чарасси ҫинчен решени йышӑннӑ, ҫавӑнта ӑна пӑсакансене хирӗҫ мӗнле мерӑсем йышӑнасси ҫинчен нимӗн те калаҫман, ҫапах та ку решение пурнӑҫласа пынӑ-ҫке, тенӗ вӑл.

Инди делегачӗ те хӑй Америка резолюцийӗшӗн сасӑлама пултарайманни ҫинчен каланӑ. Хӗҫпӑшалсене чакармалли, атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартмалли тата контроль туса хумалли кирек мӗнле чӑн-чӑн плана та аслӑ державӑсем, ҫар енӗпе вӑйлӑ державӑсем, пурте пӗрле калаҫса татӑлса килӗшнипе йышӑнмалла, тенӗ вӑл.

Кунта ҫакӑн ҫинчен аса илтерни вырӑнлӑ: Политика комитетӗнче Польша хӑйӗн резолюци проектне тӑратнӑччӗ, унта хӗҫпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссин малашнехи ӗҫӗнче виҫӗ держава резолюцин проектне те, ҫавӑн пекех асӑннӑ проекта кӗртме совет делегацийӗ сӗннӗ тӳрлетӳсене те никӗсе хумалла, тесе каланӑччӗ. Анчах Польша резолюци проектне США, Англи тата Франци сирсе ячӗҫ, ҫавӑнпа вӗсем аслӑ державӑсем пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлнипе решени йышӑнассине хирӗҫ пулнине кӑтартрӗҫ.

Аргентинӑпа Индонези представителӗсем те Инди делегачӗ пекех каланӑ.

Франци, США тата Англи представителӗсем хӑйсен резолюци проектне хӳтӗлесе сӑмах каланӑ. Вӗсен ҫӗршывӗсен правительствисем хӑйсене мирлӗ пурнӑҫ тума тӑрӑшнӑ пек кӑтартма хӑтланчӗҫ, миршӗн тӑратпӑр тесе пурне те пӗлтерчӗҫ пулсан, виҫӗ держава представителӗсем хальхинче те хӑйсен правительствисем калани тӗрӗс пулнине нимӗнпе те ҫирӗплетсе кӑтартма пултарайман.

Польша делегачӗ хӑйӗн сӑмахӗнче: виҫӗ держава резолюцийӗн ячӗ никама та улталаймӗ, вӑл атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартассине хирӗҫ, хӗҫпӑшалсене чакарассине хирӗҫ пырать, тенӗ. Чехословаки, Украина ССР тата Белорусс ССР делегачӗсем кӗске сӑмахсем тухса каланӑ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче, нумай фактсемпе сӑлтавсем ҫинчен каласа, США, Англи тата Франци сӗнӗвӗсем суя пропаганда сарас, ҫапла майпа общественноҫа улталас шутпа, Атлантика блокӗн агрессиллӗ планӗсене пытарса тӑрас шутпа тунӑ ӗҫ пулнине кӑтартса панӑ.

Асӑннӑ резолюцишӗн СССР делегацийӗ мӗншӗн сасӑламанни ҫинчен делегаци пуҫлӑхӗ А. Я. Вышинский сӑмах тухса каланӑ. Вӑл комитет резолюцине критикӑланӑ, ку ыйту пирки Совет Союзӗн делегацийӗ йышӑннӑ позицие хӳтӗленӗ. Вӑл каланине пур делегацисем те питӗ тимлӗ итленӗ.

А. Я. Вышинский сӑмахӗ

Совет Союзӗн делегацийӗ «Мӗнпур хӗҫпӑшаллӑ вӑйсемпе хӗҫпӑшалсене йӗркелесси, вӗсем мӗн чухлӗ пулмаллине палӑртасси тата вӗсене пӗр пек шайпа чакарса пырасси» ҫинчен тата «атом энергине пӗтӗм тӗнчипе контроллесе тӑрасси» ҫинчен тӑратнӑ резолюци проектне хирӗҫ сасӑларӗ, мӗншӗн тесен ҫав проект, эпир ҫирӗп ӗненсе тӑнӑ тӑрӑх, пачах юрӑхсӑр, унӑн авторӗсем хӑйсем умне лартнӑ задачӑна нимӗн чухлӗ те татса параймасть.

Ҫав резолюци проектне питех те паха тата пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан ыйтусем пирки туса хатӗрленӗ, миллионшар та миллионшар ҫынсем, мӗнпур мире юратакан халӑхсем Генеральнӑй Ассамблея ҫав ыйтусене татса парассине кӗтеҫҫӗ тата ҫав ыйтусене татса пама хушаҫҫӗ. Апла пулин те ку резолюци ҫав ыйтусене мӗн чухлӗ те пулин килӗшӳллӗ татса памасть ҫеҫ мар, ултавлӑ тата чӑнлӑхпа нимӗн чухлӗ ҫыхӑнман сӑмахсемпе хӑйӗн тӗллевӗсене пытарса, Пӗрлешнӗ Нацисен организацине йӑнӑш ҫулпа илсе кайма хӑтланать. ҫав тӗллевсем Пӗрлешнӗ Нацисен организацийӗ умӗнче тӑракан чӑн-чӑн тӗллевсемпе тата задачӑсемпе нимӗн чухлӗ те ҫыхӑнса тӑмаҫҫӗ. Сасӑланин сӑлтавӗ пирки тухса калама вӑхӑт сахал панӑ, ҫавӑнпа эпӗ ку ыйтӑва тӗплӗн ҫутатса параймастӑп. Манӑн, тӗпрен илсен, ҫав резолюцин тӗп ҫитменлӗхӗсемпе кӑлтӑкӗсем ҫинчен аса илтермелли ҫеҫ юлать, вӑл ҫитменлӗхсене пирӗн делегаци тата ытти хӑшпӗр ҫӗршывсен делегацийӗсем ку ыйтӑва Пӗрремӗш комитетра сӳтсе явнӑ чухне тӗплӗн кӑтартса пачӗҫ, кунта сасӑланин сӑлтавӗ ҫинчен тухса каланӑ хӑшпӗр ҫӗршывсен представителӗсем те, ҫак резолюцишӗн сасӑланӑ чухне хӑйсем мӗн пирки сасӑламаннине ӑнлантарса, ҫав ҫитменлӗхсене хӑшпӗр таран кӑтартса пачӗҫ.

Ҫак резолюцие шавлӑ ят панӑ пулин те, ун ҫине тимлӗн пӑхсан, ҫакна курмасӑр тӑма ҫук: асӑннӑ резолюци хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чакарас ӗҫре, атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чӑннипех чарас ӗҫре, унтан та ытларах, атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курассине, Совет Союзӗ сӗннӗ пек, халех пӗр калаҫса тӑмасӑр чарас ӗҫре, ҫавӑнпа пӗрлех атом энергине пӗтӗм тӗнчипе контроллесе тӑрас, пӗтӗм тӗнчери контроль ӗҫне мӑшкӑлакан Барух планӗнчи пек контроль мар, чӑн-чӑн контроль тӑвас ӗҫре малалла пӗр утӑм та каймасть.

Ку резолюцире атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасси ҫинчен, хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чакарасси ҫинчен, ҫав майпа халӑхсем ҫинчен, хӗҫпӑшалсене васкасах ӳстерекен мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсем ҫинчен пысӑк йывӑрлӑха сирсе пӑрахасси, ҫав ҫӗршывсенчи халӑхсен пурнӑҫ шайӗ чакса пынине, вӗсен пурнӑҫӗ начарланса пынине пӗтересси ҫинчен калани нимӗн те ҫук. Ҫав резолюцири пушӑ сӑмахсене чӑннипе атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарни вырӑнне хурса йышӑнма ҫук ӗнтӗ, унта вуникӗ ҫӗршыв представителӗсенчен тунӑ комиссие атом энергине пӗтӗм тӗнчипе контроллесе тӑрасси ҫинчен договор проектне кӗртмелли сӗнӳсене хатӗрлеме ҫеҫ хушнӑ, ҫав сӗнӳсен тӗллевӗ вара атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарнипе пурнӑҫламалла тата атом энергийӗпе мирлӗ ӗҫре ҫеҫ усӑ курмалла тӑвасси пулать. Ҫав комиссие «хӗҫпӑшалсӑрланмалли комисси» тесе тӗрӗс мар ят параҫҫӗ,—эсир пӗлетӗр ӗнтӗ, ку резолюцире хӗҫпӑшалсӑрланасси ҫинчен калани нимӗн те ҫук.

Эсир куратӑр ӗнтӗ, кунта пурне те ҫав тери чеен ҫырса хунӑ, кунта атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарни ҫинчен каланине шыраса тупма та май ҫук, ӑна чӑннипе чарасси ҫинчен нимӗн те каламан, ҫавӑнпа шыраса тупма та май ҫук.

Ку резолюцире атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасси ҫинчен те, яланхи пек хӗҫпӑшалсене чакарасси ҫинчен те, чӑннипе пӗтӗм тӗнчери контроль туса хурасси ҫинчен те нимӗн те каламан. Кӑна ҫавӑнтан та ӑнланмалла ӗнтӗ: резолюцин ҫак пайне пӗтӗмпех Барух планӗ тӑрӑх ҫырса хатӗрленӗ, вӑл планра атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасси тата пӗтӗм тӗнчипе контроллесе тӑрасси ҫинчен нимӗн те каламан. Ҫав плана атомлӑ хӗҫпӑшал туса кӑларас ӗҫе уҫҫӑн тата пӗр чармавсӑр туса пыма, атомлӑ бомбӑсемпе ҫынсене массӑллӑн вӗлерсе пӗтерме тунӑ.

Ҫак резолюци авторӗсем—Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен делегацийӗ ертсе пынӑ темиҫе делегаци—чӑннипех атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасшӑн, чӑннипех атом энергине пӗтӗм тӗнчипе контроллесе тӑрасшӑн пулсан, апла пулсан, мӗншӗн ун ҫинчен, Совет делегацийӗн тӳрлетӗвӗсенче сӗннӗ пек, уҫӑмлӑн каламалла мар-ха.

Анчах та ку резолюци авторӗсем, Пӗрлешӳллӗ Штатсем пуҫ пулса тӑнипе агрессиллӗ Атлантика блокӗн ытти членӗсем, ҫав ҫулпа кайман, вӗсем атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма пӗр калаҫса тӑмасӑр чарассипе хӗҫпӑшалсене чакарасси вырӑнне хӑйсен проектӗнче никама та тата нимӗн те тума хушман пушӑ сӑмахсем калани хӑйсемшӗн усӑллӑрах тесе шутлаҫҫӗ, ҫав сӑмахсем чӑннипе атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарассине тата атом энергине пӗтӗм тӗнчипе контроллесе тӑрассине йышӑнманнине пытарса тӑраҫҫӗ. Резолюци авторӗсем хӗҫпӑшалсене чакарас ыйтӑва та ҫавӑн пек тунӑ. Эпӗ ҫакӑн пирки иккӗленместӗп, ку резолюцие тимлӗн пӑхса тухнӑ пулсан, эсир ҫакна курмасӑр тӑма пултараймӑн: резолюцире хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чакарас вырӑнне хӗҫпӑшаллӑ вӑйсемпе хӗҫпӑшалсем ҫинчен **сведенисем пухасси** ҫинчен ҫеҫ каланӑ, ҫакна хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чакарас ӗҫе чарса лартма тунӑ.

Ҫакӑн ҫинчен, сӑмахран, резолюцин 3-мӗш пункчӗ уҫҫӑн кӑтартса парать, унта мӗнпур хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене тата мӗнпур йышши хӗҫпӑшалсене **майӗпен палӑртассипе тӗрӗслесси** ҫинчен ҫеҫ каланӑ, урӑх нимӗн те ҫук. Резолюцин 5-мӗш пункчӗ те ҫакнах кӑтартса парать, вӑл комиссие хӑйӗн сӗнӗвӗсене хатӗрленӗ чухне пуринчен малтан «хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене» майӗпен тата пӗрмаях **палӑртас тата тӗрӗслес** плана пӑхса тухма хушать. Паллӑ ӗнтӗ, кунта пӗтӗм ӗҫе мӗнпур хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене ахаль ҫеҫ **ҫырса тухнипе** тата **ҫырнисем тӗрӗс пулнине тӗрӗсленипе** пӗтерсе лартаҫҫӗ, кун ҫинчен эпир пирӗн сесси ӗҫлеме пуҫласанах, пирӗн делегаци Ачесон господинӑн ҫак сӗнӗвӗсене критикӑласа тухса каланӑ чухнех каларӑмӑр.

Ҫавӑн пек сӗнӳсене хӗҫпӑшалсене тата хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чӑннипех чакармалли сӗнӳсем вырӑнне хурса йышӑнма май ҫукки уҫҫӑнах курӑнса тӑрать. Ҫакӑ Совет Союзӗн делегацийӗ панӑ, ытти хӑшпӗр делегацисем ырланӑ сӗнӳсемпе танлаштарсан, уйрӑмах уҫҫӑн курӑнать. Паллӑ ӗнтӗ, Совет Союзӗн сӗнӗвӗсенче Хӑрушсӑрлӑх Совечӗн яланхи членӗсене—США-на, ССР Союзне, Англие, Францие тата Китая—ҫак сӗнӗве йышӑннӑ вӑхӑтра тӗлне пулнӑ хӑйсен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсемпе хӗҫпӑшалӗсене ҫак сӗнӗве йышӑннӑ кунран шутласа пӗр ҫулталӑк хушшинче виҫҫӗмӗш пайӗ чухлӗ чакарма сӗннӗ. Эсир танлаштарса пӑхӑр ӗнтӗ—пӗр енчен хӗҫпӑшалсене **ҫырса тухасси**, тепӗр енчен,—**виҫҫӗмӗш пайӗ чухлӗ чакарасси!**

Халӗ эпӗ, паллах, ку е леш сӗнӗве ырламалли е хурламалли сӑлтавсене каласа тӑма тата Совет Союзӗн сӗнӗвӗсене хӳтӗлемелли сӑлтавсене малалла аталантарма пултараймастӑп. Эпӗ ҫак икӗ сӗнӗве ахаль ҫеҫ танлаштарса пӑхма сӗнетӗп, вара паян пленумра сасӑланӑ резолюцири сӗнӳсен мӗнпур ултавӗпе икӗпитлӗхӗ часах курӑнӗ.

Ҫакна ҫӗнӗрен палӑртса хӑварас пулать: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Англи тата Франци сӗннӗ резолюцие,—уншӑн комитет членӗсен ытларах пайӗ сасӑларӗ, сасӑламан делегацисем те чылай пулчӗҫ,—Пӗрлешнӗ Нацисен организацийӗ умӗнче хӗҫпӑшалсене чакарас тӗлӗшпе тӑракан задачӑна мӗн чухлӗ те пулин татса пама тӑрӑшни вырӑнне хурса хаклама юрамасть.

Кун ҫумне тата ҫакна хушса каламалла: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем те, вӗсем майлӑ пулнӑ Англипе Франци те ку задачӑна мир интересӗсем тата халӑхсен хӑрушсӑрлӑхӗн интересӗсем ыйтнӑ пек татса пама тӑрӑшманни пирки нимӗнле иккӗленӳ те пулма пултараймасть.

Маларах каланине шутра тытмасан, пуриншӗн те паллӑ факта—ҫав ҫӗршывсенче, пуринчен малтан, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче, хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чакарасси ҫинчен сӑмах калаҫнӑ вӑхӑтрах, хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене урса кайнӑ пекех ӳстерсе пынине, ҫав хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене пӗрмаях, татӑшах, ытларах та ытларах ӳстерсе пынине,—чакарнине мар, ӳстерсе пынине,—ҫав факта мӗнле ӑнланмалла-ха? Малта каланине шутра тытмасан, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, хӑйсен компаньонӗсем, пуринчен малтан Англипе Франци пулӑшнипе, ытти ҫӗршывсене те урса кайнӑ пекех хӗҫпӑшалланмалли ҫул ҫине тӑратма хӑтланнине, ҫавӑн пек ҫул ҫине тӑратма тӑрӑшнине мӗнле ӑнланмалла-ха?

Паллах ӗнтӗ, ку вӑл хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чакарасси ҫинчен калаҫнипе нимӗн чухлӗ те килӗшсе тӑмасть! Ҫавӑнпа та США президенчӗ конгресса янӑ юлашки послани пирки тӗлӗнмелле. Вӑл ҫак кунсенче конгресса янӑ посланире: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Великобританипе тата Франципе пӗрле, Генеральнӑй Ассамблейӑна мӗнпур хӗҫпӑшалсене чакармалли тата контроль туса тӑмалли план пачӗҫ, планра витӗмлӗ контроль системине палӑртса хунӑ, ку вӑл хӗҫпӑшалсене чакармалли татӑклӑ сӗнӳ пулать, тесе каланӑ. Шӑпах ҫавӑн пек каланӑ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ.

Анчах эпир ҫакна куратпӑр: ҫав сӗнӳсенче, ҫав резолюцире хӗҫпӑшалсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене мӗнле те пулин, мӗн чухлӗ те пулин, хӑҫан та пулин чакарасси ҫинчен сӑмах та ҫук. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ҫав сӗнӳсене мӗн чухлӗ те пулин ӗненсе хака хума иртнӗ вӑхӑтра та май пулман, хальхи вӑхӑтра та май килмест, малашне те май килес ҫук,—кунтан тӗлӗнмелли ҫук.

США президенчӗ хӑйӗн посланийӗнче: виҫӗ держава панӑ сӗнӗве Совет Союзӗ йышӑнас пулсан, вара ҫав сӗнӳ хӗҫпӑшалланнин йывӑрлӑхне чакарнӑ пулӗччӗ, тӗнчери пурлӑхсемпе этемлӗхшӗн ырӑ тӑвас ӗҫре усӑ курма май панӑ пулӗччӗ, тесе асӑрхаттарнӑ,—вӑл ҫавӑн пек каланине те ӗненме май ҫук.

Ку сӑмахсене Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствин агрессиллӗ планӗсене, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем тата пӗр сӑмахсӑр США майлӑ тӑракан, пур ӗҫре те, пур енӗпе те вӗсене пулӑшакан ытти хӑшпӗр ҫӗршывсем тӗнчери право принципӗсемпе нормисене сӗмсӗррӗн пӑснине общественноҫран пытарас шутпа каланӑ.

Атлантика блокне хутшӑннӑ ытти ҫӗршывсен представителӗсем, халӗ кунта тухса каланӑ Франци правительствин представителӗ Жюль Мок господин йышшисем, каланӑ сӑмахсем те ҫавӑн пекех. Сӑмах майӗпе каласан, вӑл хальхи вӑхӑтра камӑн представителӗ пулни ҫинчен калама йывӑр, ну, калӑпӑр, вӑл ҫапах та вырӑнтан тухса ӳкнӗ Франци правительствин представителӗ пулса тӑрать, тейӗпӗр. **(Итлеме пынӑ ҫынсем тата чылай делегатсем кулаҫҫӗ).** Ку вӑл, паллах ӗнтӗ, вӑл калани тата ытларах авторитетлӑ пулмалла тӑвать. **(Кулаҫҫӗ).** Ҫав представительсем общественноҫа улталас, халӑхсене улталас, пирӗн ҫинчен элеклесе, хӑйсен агрессиллӗ планӗсене халӑхран пытарса хӑварас тесе тӗрлӗрен майсемпе тӑрӑшаҫҫӗ.

Ҫавна ака мӗншӗн тӑваҫҫӗ: халӗ эпир ун ҫинчен калаҫакан резолюци тӗнчери пурлӑхсемпе этемлӗхе ырӑ тӑвас ӗҫре усӑ курма,—США президенчӗ ҫавӑн пек каланӑ,—нимӗнле май та туса памасть, мӗншӗн тесен резолюци авторӗсем хӑйсем умне ун пек тӗллев лартман та. Пӗтӗмпех урӑхла, шӑпах та Совет Союзӗн сӗнӗвӗсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе вӗсен союзникӗсем пек ҫӗршывсенче питӗ васкаса хӗҫпӑшалланнине пӗтерсе лартма, хӑйсен пурлӑхӗсемпе чӑннипех этемлӗхшӗн ырӑ тӑвас ӗҫре усӑ курмалла тума май параҫҫӗ. Совет Союзӗн пурлӑхӗсемпе совет халӑхӗшӗн ырӑ тӑвас тата мире юратакан ытти халӑхсемшӗн ырӑ тӑвас ӗҫре усӑ кураҫҫӗ.

Жюль Мок господин сӑмахӗнчи ҫав вырӑн ҫинчен те манӑн калама тивет, мӗншӗн тесен вӑл, СССР агрессиллӗ вӑрҫӑ тӗллевӗсем тытса пырать тесе кӑтартса пама хӑтланса, Совет Союзӗн вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра халӑх хуҫалӑхне вӑйлатмалли пилӗкҫуллӑх планне илсе кӑтартма май пур тесе шутларӗ. Анчах Жюль Мок господин, вӑл ку тӗлӗшпе тем те пӗр шухӑшласа кӑларма ӑста ҫын пулин те, унӑн куҫӗсем умӗнче пулнӑ документра тата ҫав документран вуласа панӑ вырӑнта хӑй вуланинчен ытла урӑх нимӗн те вуласа параймарӗ. Вӑл мӗн пурӗ те ҫав планӑн Совет Союзӗн оборонине пурнӑҫласси ҫинчен калакан пайне ҫеҫ вуласа пачӗ,—ку планӑн ҫав пайӗ, ытти ҫӗршывсен государство планӗсен ҫавӑн пек пайӗсемпе тата вӗсем ҫар енӗпе тӑвакан ытти мӗнпур ӗҫсемпе танлаштарсан, пӗртте пысӑк мар.

Жюль Мок господин пирӗн ҫинчен тивӗҫсӗр ӗҫ тӑваҫҫӗ тесе темскер каласшӑн пулчӗ. Анчах вӑл ҫакна ҫеҫ кӑтартса пачӗ: вӑл нимӗн те кӑтартса параймарӗ, нимӗн те кӑтартса памарӗ.

Жюль Мок господин тапратнӑ ыйту пирки—ССР Союзӗн оборони пирки тӑракан ыйту пирки ӗҫ мӗнле-ха? Эпӗ кун пирки Совет правительствин пуҫлӑхӗ И. В. Сталин 1951 ҫулхи октябрьте «Правда» корреспонденчӗн ыйтӑвӗсем ҫине панӑ ответри сӑмахсемпе ответлетӗп. Корреспондент: мӗншӗн-ха США-ри тӗрлӗ деятельсем шав ҫӗклеҫҫӗ тата США хӑрушсӑрлӑхне хӑратни ҫинчен кӑшкӑраҫҫӗ, ҫавӑн пек шав ҫӗклеме мӗнле те пулин сӑлтав пур-и?—тесе ыйтнӑ. Ҫак ыйту ҫине ответлесе, Совет правительствин пуҫлӑхӗ И. В. Сталин ҫапла каланӑ:

(Малалли 4-мӗш страницӑра).

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

(Малалли, Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра).

«Çавăн пек шав çĕклеме нимĕнле сăлтав та çук.

Совет Союзĕ атомлă хĕçпăшалпа усă курассине хирĕç тăрать çеç мар, ăна чарса лартассишĕн, ăна туса кăларма та чарассишĕн тăрать, кун çинчен США деятелĕсем пĕлмессĕ мар».

Совет Союзĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартма темиçе хут та сĕнчĕ, анчах унăн сĕнĕвне кашни хутрах Атлантика блокĕнчи державăсем, вăл шутра Франции Жюль Мок йышши представителĕсем те, йышăнмарĕç.

Çакă ĕнтĕ Совет Союзне, агрессорсене лайăх хĕçпăшалланнипе кĕтсе илмелле пултăр тесе, атомлă хĕçпăшал тума хистерĕ.

«Паллах,—тесе каланă Сталин,—агрессорсем Совет Союзĕ çине тапăнсан, вăл хĕçпăшалсăр юлассине кĕтессĕ. Анчах Совет Союзĕ çавăнпа килĕшмест, вăл агрессорсене вăйлă хĕçпăшалпа кĕтсе илме кирлĕ тесе шутлать».

Акă мĕне пĕлтерет, Жюль Мок господин, эсир кунта Госплан председателĕн сăмахĕнчен — пирĕн государствăн 1946—1950 çулхи планĕ çинчен каланă сăмахран илсе кăтартнă вырăн.

Çав сăмахсене Жюль Мок господин мĕн шутпа каланă-ха? Вăл ăна агрессиллĕ вăрçă планĕсене, сăмахран, Францире пулнă Плевен правительствин çавăн пек планĕсене, питĕ васкаса хĕçпăшалланнине, питĕ пысăк çар бюджечĕсене общественноçран пытарса тăрас шутпа каланă,—васкаса хĕçпăшалланакан, çавăн пек çар бюджечĕсем йышăнакан çĕршывсем пур енĕпе те пысăк йывăрлăхсем тÿсеççĕ. Жюль Мок хăйĕн сăмахĕсене çав фактсене общественноçран пытарса тăрас, пуриншĕн те Совет Союзĕпе унăн тулашри политики айăплă пулнă пек кăтартас шутпа каланă.

Ку вăл халăхсене улталамалли политика, анчах ултавçăсем нихçан та хăйсен халăхĕсене пĕтĕмпех улталама пултараймаççĕ. Вĕсене халăхсем тăрă шыв çине кăлараççĕ тата тăрă шыв çине кăларĕç.

Совет Союзĕн делегацийĕ панă тÿрлетÿсем çинчен калас пулсан, пирĕн делегаци хăй панă тÿрлетÿсене йышăнасси çинчен çак пленумра сасăламалла тесе çине тăмасть. Мĕншĕн? Икĕ тĕп сăлтав пирки.

Пĕрремĕш: Совет Союзĕн делегацийĕ Чехословаки делегацийĕ сĕннĕ тÿрлетÿсене ырларĕ, çак тÿрлетÿсене йышăнсан, вара ытти тÿрлетÿсем кирлĕ пулмаççĕ.

Иккĕмĕш: ыран, январĕн 12-мĕшĕнче, пĕрремĕш комитет кун йĕркин улттăмĕш пунктĕнчи ыйтусене — «Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» сÿтсе явма тытăнать. Ку ыйтусенчен хăшпĕрисем пĕрремĕш комитетăн кунта сасăланă резолюцийĕ пирки панă тÿрлетÿсенчи сĕнÿсене пырса тивеççĕ,— кун пек условисенче совет делегацийĕ пирĕн сĕнÿсене кунта сасăлама тăратни кирлĕ мар, тесе шутларĕ. Кунтан та ытларах, пĕрремĕш комитетра тивĕçлĕ ыйтусене сÿтсе явнă чухне ку ыйту пирки халиччен панă сĕнÿсенчен чылай урăхларах сĕнÿсем пани те пулма пултарать.

Индонези делегачĕ: совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене паян сасăлама тăратни кирлĕ мар тесе шутлани Совет Союзĕ хăйĕн позицине улăштарнине пĕртте пĕлтермест, терĕ. Вăл тĕрĕс каларĕ. Халиччен СССР делегацийĕ питĕ паха ыйтăва—атомлă хĕçпăшала чарса лартасси, пĕтĕм тĕнчери контроль тăвасси, хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарасси çинчен тăракан ыйтăва ăнаçлă татса пама пĕтĕм вăй-хăватпа тăрăшрĕ. Вăл малашне те халиччехи пекех ĕçлесе пырĕ.

* * *

Виçĕ держава сĕннĕ резолюци проектне сасăлама тăратнă. Резолюцишĕн 42 делегаци сасăланă, 5 делегаци (СССР, Чехословаки, Польша, Белорусси тата Украина) хирĕç сасăланă, 7 делегаци (Аргентина, Пакистан, Инди, Индонези, Бирма, Йемен, Египет) нихăш майлă та сасăламан. Çапла вара, чылай делегацисем сасăлама хутшăнманнипе çав резолюци майлă пулма килĕшменнине шута илсен, мĕнпур делегацисен 1/3 пайĕ çав резолюци проекчĕшĕн сасăламан.

Унтан Генеральнăй Ассамблея США агрессиллĕ ĕçсем туни тата ытти çĕршывсен шалти ĕçĕсене хутшăнни çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма тытăннă.

США-ри влаçра тăракан ушкăнсем агрессиллĕ ĕçсем тунине тата ытти çĕршывсен шалти ĕçне хутшăннине тăрă шыв çине кăларнă

ПАРИЖ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Январĕн 11-мĕшĕнче Генеральнăй Ассамблея пленумĕ США агрессиллĕ ĕçсем туни тата ытти çĕршывсен шалти ĕçне хутшăнни çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă.

Ку ыйтăва Совет Союзĕн делегацийĕ сĕннипе Генеральнăй Ассамблейăра сÿтсе явма лартнă. Кунта США-ра 1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закона кăларнă пирки сăмах пынă. Асăннă законра ССР Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрла тата диверсиллĕ ĕçсем тума, тăван çĕршыва сутнă çынсенчен тата çавăн йышши ытти çынсенчен асăннă çĕршывсенчи политикăллă стройсене хирĕç кĕрешме хĕçпăшаллă ушкăнсем тума 100 миллион доллар пама йышăннă. Совет Союзĕн делегацийĕ тăратнă резолюци проектĕнче асăннă закона Генеральнăй Ассамблейăн сивлемелле тата США правительствине ку закона пăрахăçлама тивĕçлĕ мерăсем йышăнма сĕнмелле, тесе каланă.

Политика комитетĕнче пулнă дискусси Совет Союзĕ США правительствине айăплани пĕтĕмпех тĕрĕс пулнине çирĕплетсе кăтартнă. Çавăнпа та делегацисен виççĕмĕш пайĕ США майлă пулман. США çав закона йышăннине тĕрĕс ĕç пек кăтартма, айăпа хăй çинчен сирсе яма хăтланнă пулнă. Анчах делегацисен виççĕмĕш пайĕ США çавăн пек хăтланнипе килĕшмен.

Чехословаки делегацийĕн пуçлăхĕ Секаниннова тата Польша делегацийĕн пуçлăхĕ Вербловский хăйсем мĕншĕн совет делегацийĕ сĕннĕ резолюцишĕн сасăлани çинчен каланă, СССР делегацийĕн сĕнĕвне çине тăрса хÿтĕленĕ.

Украина ССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. М. Барановский Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем «1951 çулхи закона» йышăнни ытти çĕршывсен шалти ĕçне сĕмсĕррĕн хутшăнни, государствăсем пĕрпĕрин çыхăнса тăрас ĕçре нихçан пулман киревсĕр ĕç, тесе каланă.

Пĕтĕмпе 571 миллион çынлă 11 çĕршывăн представителĕсем Политика комитетĕнче сасăламарĕç, ку вара Америкăн çÿлте асăннă законне сивлени тата США-н ООН-ра ыттисене хушса тăмалли политикине вăйлă çапса хуçни пулать, тенĕ Барановский.

Трибуна умне США представителĕ Мэнсфилд тухнă. Вăл США правительстви çине хунă пысăк айăпа, ăна мире хирĕç питĕ пысăк преступлени тунăшăн айăпланине сирсе яма хăтланнă. США правительстви пысăк айăплă ĕç туни пĕтĕмпех палăрнă. Çавна хирĕç Мэнсфилд нимех те йĕркеллĕ калайман, нимĕнле сăлтав та кăларса тăратма пултарайман. Вăл калани вара ниме тăман пушă сăмах пулнă.

Мэнсфилд каланине хирĕç СССР делегацийĕн пуçлăхĕ сăмах тухса каланă. Вăл США представителĕ фактсене пăсса кăтартнине, жуликла ĕçсем тума хăтланнине тăрă шыв çине кăларнă, США представителĕ çавăн пек хăтланни те ку пысăк айăпа Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви çинчен сирсе яма пултарайманнине кăтартса панă.

А. Я. Вышинский сăмахĕ

Господин председатель, манăн каламалли вăхăт сахал, çавăнпа кĕскен каламалла пулать. Кунта Мэнсфилд господин Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен делегацийĕ ячĕпе сăмах тухса каларĕ. Вăл, ман шутпа, пире тĕп ыйтуран пăрса яма хытă тăрăшрĕ. Вăл çавна тума тăрăшни мĕн чухлĕ ăнаçлă пулнине эпĕ пĕлместĕп, анчах, тем пулсан та, эпĕ çав никам сирсе яма пултарайман факта палăртма тивĕçлĕ.

Пире пурне те интереслентерекен тĕп ыйту çакăн пек: «1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закон» вăл мĕнле закон, унта мĕнле тĕллевсем лартнă, мĕн енчен тата мĕн таран вăл тĕнчери çĕршывсен прависене пăсни тата Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшинче тунă килĕшÿсене пăсни пулать. (Эпĕ Литвиновпа Рузвельт 1933 çулта тунă килĕшĕве асра тытатăп). Юлашкинчен çав закон мирпе хăрушсăрлăхшăн мĕн тери хăрушă ĕç пулса тăрать. Çав закон ытти государствăсен, кунхинче Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен шалти ĕçĕсене хутшăнни пулать, ку вăл пысăк хирĕçÿсем кăларма пултарать, мĕншĕн тесен хĕçпăшал чĕлхипе калаçма пуçласан, çавна хирĕç хĕçпăшал чĕлхипе ответлессĕ.

Акă кун йĕркинчи халĕ сÿтсе явакан пунктпа, «1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закона» кăларнă пирки Совет Союзĕ Америка правительстви çинчен панă жалоба» тесе ят панăскерпе, çыхăнса тăракан ыйтусем.

Çак ыйтусем çине эпĕ кĕскен ответлеме тăрăшăп. Паллах ĕнтĕ, эпĕ халĕ Пĕрремĕш комитетра çак ыйтăва сÿтсе явнă чухне илсе кăтартнă пур сăлтавсемпе тĕслĕхсем çинчен каласа пама пултараймастăп. Анчах эпĕ халĕ çакăн пек выводсем çинчен каласа пама пултаратăп.

Пĕрремĕшĕ. «1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закон» тата çав закона Керстен сĕннипе кĕртнĕ тÿрлетÿ, ку чи тĕп вырăнта тăраканни, ССР Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсенчен тарнă çынсем текенскерсенчен уйрăм çынсене тата çынсен ушкăнĕсене пухма тата вĕсене укçа парса тăма палăртаççĕ.

Çак факт пулса тăрать-и, е факт пулса тăмасть?

Çав закона вуласа пăхăр, вара эсир ку факт пулнине куратăр!

Урăх мĕнле те пулин тĕслĕхсемпе сăлтавсем илсе кăтартма кирлĕ-ши?

Паллах ĕнтĕ, ку факт пирки урăх нимĕнле тĕслĕхсемпе сăлтавсем те илсе кăтартма кирлĕ мар.

Иккĕмĕшĕ. «1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закон» тăрăх çав тĕллевсене пурнăçлама 100 миллион доллар параççĕ. Çак факт пулса тăрать-и, е факт пулса тăмасть? Ку ĕнтĕ, факт пулса тăрать. Закона вуласа пăхăр, эсир унта çакна уççăнах курма пултаратăр. Тата çĕнĕ тĕслĕхсемпе сăлтавсем илсе кăтартма кирлĕ мар.

Виççĕмĕшĕ. Ку укçана мĕнле тĕллевсене пурнăçлама параççĕ-ха?

Законра: «Хĕçпăшаллă ушкăнсене укçа парса тăма 100 миллион доллар уйăрас...», тесе каланă. Çакă та ĕнтĕ, факт. Малалла законра çапла каланă: «...Халăх демократиллĕ çĕршывсенчен тата Совет Союзĕнчен тĕрлĕ сăлтавсене пула тарнă çынсене пухса çавăн пек ушкăнсем тумалла», тенĕ. Ку сăлтавсем сирĕн шутпа юрăхлă пулччăр ĕнтĕ, пирĕн шутпа вĕсем юрăхлă мар.

Çапла вара, эпир виçĕ факта палăртса йышăнтăмăр:

Пĕрремĕшĕнчен, «1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закон» тата Керстен тÿрлетĕвĕсем урăх çĕршывсенчен тарнă уйрăм çынсене пухма тата çавăн пек çынсенчен ушкăнсем тума, вĕсене укçа парса тăма палăртаççĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, законра çав çынсенчен тунă хĕçпăшаллă отрядсене тума укçа пама палăртнă тата,

виççĕмĕшĕнчен, çавна пурнăçлама 100 миллион доллар уйăрнă.

Тăваттăмĕшĕ. Асăннă хĕçпăшаллă отрядсемпе хĕçпăшалла çарсем пысăк пулмалла. Ку акă çак фактсенчен—Мэнсфилд тухса каланинчен, Керстен тухса каланинчен, Ворис тухса каланинчен тата ытти чылай конгрессменсем тухса каланинчен курăнать. Вĕсем мĕн каланине эпĕ официальнăй документсенчен илсе вуласа патăм. Çав документсем ман алăра пур. Мана вăхăт парас пулсан, эпĕ вĕсене нумай вуласа кăтартма пултаратăп. США пухма шутланă хĕçпăшаллă отрядсем пысăк пулмалла. Çакна çирĕплетсе кăтартма эпĕ Даллес господин мĕн каланине илсе кăтартатăп, вăл «хытă çапма пултаракан хăватлă вăйсем» тăвасси çинчен каланă. Даллес тата çав вăйсем ăçта тămалли çинчен те каласа панă. Эпĕ унăн сăмахне илсе кăтартатăп, вăл çав вăйсем «Совет Союзĕн йĕри-таврали чиккисен çывăхĕнче тăмалла», тенĕ.

Пиллĕкмĕшĕ. Çак хăватлă хĕçпăшаллă вăйсемпе ССР Союзĕнчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи политикăллă стройсене аркатмалли хатĕр туса усă курма палăртнă.

Ку вара, факт мар-и? Ку вăл асăннă законăн авторĕсем тата США-н тулашри политикине ертсе пыракансем хăйсем каласа пани.

Çав хĕçпăшаллă вăйсене тĕрлĕ нацисен çар чăсĕсем пек туса йĕркелеме палăртнă, вĕсен нациллĕ полкĕсен ялавĕсем, çар ретĕнче тăни çинчен пĕлтерекен паллăсем, хăйсен наци çыннисенчен уйăрнă командованийĕ пулмалла.

Улттăмĕшĕ. Çав хĕçпăшаллă отрядсене нацисен легионĕсем шутласа Атлантика блокĕн составне кĕртме палăртнă.

Çиччĕмĕшĕ. Çав хĕçпăшаллă отрядсемпе тата уйрăм çынсемпе диверсиллĕ ĕçсенче тата ытти тĕллевсене пурнăçлас ĕçре усă курма палăртнă. Кун пирки законра: «кирек мĕнле тĕллевсене пурнăçлас ĕçре те», тесе çырнă. Керстенпа Остин пĕрпĕрин патне янă çырусенче мĕн çырни çинчен эпĕ Пĕрремĕш комитетра тĕплĕ каласа панăччĕ. Эпĕ çавăн çинчен аса илтерем. Вĕсем пĕр-пĕрин патне янă çырусенче асăннă отрядсемпе «терррорла ĕçсем тумалли тĕллевсене пурнăçлама», «террорла ĕçсем тума» усă курасси çинчен каланă. Кун пирки эпĕ каланă хыççăн та Мэнсфилдпа унăн компанийĕ нимĕн те шарламаççĕ.

Генеральнăй Ассамблейăра мирпе этемлĕхĕн хăрушсăрлăхне хирĕç тăвакан преступленисен кодексне тăвасси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явас умĕн çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Çав кодексри 2-мĕш статьяра тĕрлĕ йышши çар чăсĕсемпе, тĕрлĕ ушкăнсемпе диверсиллĕ, террорла ĕçсене тата çавăн евĕрлĕ ытти ĕçсене тума усă курнине сивлемелле, тесе çырнă. Керстен кун пирки Остин патне çыру янă. Унта вăл çапла çырнă: асăннă проекта çав сессире пăхса тухассине хирĕç мерăсем йышăнăр. Ăна сессире пăхса тухсан 1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи закона конгресра çирĕплеттерме май килмест, ăна çав кодекс тăрăх террорла ĕçсен законĕ тесе шутлама пултараççĕ, тенĕ.

Ун чухне вара Остин çапла ответленĕ: эп шикленĕр, вĕсем ăна тума пултараймĕç, тенĕ. Ку ответа хирĕç Керстен çĕнĕ çыру янă, ăна пичетлесе кăларнă, эсир ун çинчен пĕлес тетĕр пулсан, ăна кирек хăçан та вуласа пама пулать. Эп шикленĕр, ун пек пулма пултараймасть, кодекс тăрăх çавна террорла ĕçсен законĕ тесе шутлама пултараймĕç!—тесе ответленĕ Остин. Ăна хирĕç Керстен: эсир начар чухлатăр, террорла ĕçсем тумасăр çавăн пек ĕçсене пурнăçламаççĕ, халĕ эпир хамăр умма лартакан задачăна террорла ĕçсем тумасăр пурнăçлама çук, тесе ответленĕ.

Акă ĕнтĕ, çиччĕ вывод. Ку ыйтăва Политика комитетĕнче пăхса тухнă чухне пирĕн ирĕксĕрех çавăн пек выводсем тумалла пулчĕ.

Америкăра октябрĕн 10-мĕшĕнче йышăннă закон вăл—террорла ĕçсем тумалли закон. Ăна Совет Союзĕнче террорла ĕçсем тума шутласа йышăннă. Çав ĕçсене хăйсен тăван çĕршывĕсене сутнă ирсĕр çынсем пулăшнипе тума палăртнă. Çав çынсене Белорусси делегачĕ тĕрĕс хак панă, вĕсене обществăн ирсĕр каяшĕсем, «ăпăр-тапăрсем», тесе каларĕ.

Кунта Америка делегачĕсем США ытти çĕршывсемпе килĕшсе пурăнмалла тăвасшăн тăрăшни çинчен нумай калаççĕ. США правительстви чăннипех те ытти çĕршывсемпе, сăмахран, Совет Союзĕпе килĕштерсе пурăнма тăрăшать пулсан, унăн çав закона пăрахăçламалла.

Юлашкинчен Мэнсфилд господин манпа мĕн пирки калаçни çинчен пĕр-икĕ сăмах калас пулать.

Чăн та, Политика комитечĕн ларăвĕ хыççăн, Америкăн 1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи законне пăхса тухнă хыççăн, Мэнсфилд господин манран: хăвăр сăмахăра каланă чухне эсир Венгрире Америка летчикĕсемпе пулса иртнĕ ĕçе асра тытмарăр-и?—тесе ыйтрĕ.

Ку ыйту çине ответленĕ чухне, эпĕ çав ĕçе асра тытман, терĕм. Америка самолечĕсем Совет Союзĕн чиккисем урлă вĕçсе каçнă пирки эпир принцип енчен мĕнле позици тытса пынă пирки ăна каласа патăм.

Мэнсфилд господинăн тепĕр ыйтăвне—Америкăн Венгри территорийĕнче тытнă летчикĕсене кам суд туса айăпласси çинчен ыйтнине хирĕç эпĕ çапла ответлерĕм: уголовно-процессуальнăй право тăрăх айăпа кĕнĕ çынсене, вĕсем хăш территорире преступлени тунă, çавăнти суда параççĕ. Америка летчикĕсене хальхинче Венгри территорийĕнче тытнă, çавăнпа та вĕсен ĕçне пăхса тухма Венгри судне памалла, терĕм. Çавăнпа та Мэнсфилд господин пирĕн хушăмăрта пулнă калаçăва мĕншĕн пăсса кăтартнине,—вăл ку ĕçе эпĕ унпа хам ятпа мар, Венгри правительстви ячĕпе каласнă пек кăтартма хăтланнине,—пачах та ăнланса илме çук. Çавăн чухнех эпĕ вăл тÿрремĕнех ыйтни çине ответлесе, ку сăмахсене хам ятпа калатăп, тенĕччĕ.

Чăнах та, Мэнсфилд господин ыйтнине хирĕç эпĕ: Америка самолечĕсем разведка тăвас тĕллевсемпе совет территорийĕ çинче вĕçсен, эпир вĕсене çав ĕçе тума чарăпăр, вĕсем тĕлĕшпе халиччен мĕн тунă, çавăн пек тăвăпăр, тесе çирĕплетсе каларăм. Çавăн чухне эпĕ Америка самолечĕ Либава патĕнче пирĕн чикĕ урлă вĕçсе каçсан мĕн пулнине асра тытнăччĕ.

Чăннипе мĕн çинчен калаçнине пăсса кăтартса, пулман ĕçе пулнă пек кăтартса, Мэнсфилд господин чăнлăха пăснă, тĕрĕс каламан.

Анчах çак Мэнсфилдпа калаçнă сăмах, паллах, вуннăмĕш вырăнта тăракан ĕç пулса тăрать, çакна нимĕн каламасăрах ăнланса илме пулать ĕнтĕ. Ку сăмах пирки Ассамблейăра каласа пани кирлех те марччĕ пулĕ, анчах Мэнсфилд кун çинчен сăмах хускатса общественность шухăшне пысăк ыйтуран—США правительстви тĕнчери çĕршывсен пурте йышăннă прависен нормисене пăсса ытти государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнни çинчен тăракан ыйтуран, ССР Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрла тата диверсиллĕ ĕçсем тумашкăн пама укçа уйăрнă намăссăр закон пирки тăракан ыйтуран пăрса яма хăтланчĕ. Çавăнпа та кун пирки каламалла пулчĕ.

* * *

Греци представителĕ сăмах каланă. Вăл Ассамблейăна США-ра кăларнă агрессиллĕ закона сÿтсе явас ĕçрен пăрса яма хăтланнă, Совет Союзĕ çинчен элеклесе, халиччен темиçе хут каланă сăмахсенех каланă. Унтан Совет Союзĕ тăратнă сĕнĕве сасăланă. США пур майсемпе те хытă хĕснипе пула ку сĕнĕве хирĕç сасăлакансем делегацисен 2/3 пайĕнчен пăртак ытларах пухăннă.

Политика комитетĕнче мĕнле пулнă, çавăн пекех; США майлă сасăлама килĕшмоннисем делегацисен виççĕмĕш пайне яхăн пулнă. СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсем Совет Союзĕ сĕннĕ резолюцишĕн сасăланă. Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи, Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи тата Азири çĕршывсен делегацийĕсем пурте пекех—Афганистан, Бирма, Египет, Гватемала, Инди, Индонези, Иран, Пакистан, Сири, Саудовски Арави тата Йемен делегацийĕсем нихăш майлă та сасăламан, Совет Союзĕ айăпланине сирсе ярас шутпа США кăларса тăратнă сăлтавсене вĕсем ĕненмени палăрнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ январĕн 12-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç халичченхи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçаççĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтереççĕ.

Ĕнер хĕвеланăçĕнчи фронтра, Чанданьпе Йоньчхонь районĕсенче, тăшман, нумай танксем тата артиллери пулăшнипе, темиçе хутчен те хытă тапăнса атакăсем тунă, Халăх çарĕн чаçĕсем йышăнса тăракан пысăк пĕлтерĕшлĕ сăртсене тытса илесшĕн пулнă. Халăх çарĕн чаçĕсем кашниччех тăшмана хирĕç хытă тăрса хăватлă çапăçнă. Çавна пула тăшман пысăк çухатусем тÿссе каялла чакнă. Çак çапăçусенче Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 930 çын ытла вĕлернĕ тата амантнă. Тăшманăн 2 танкне пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра Халăх çарĕн соединенийĕсем тăшмана хирĕç тупăсемпе пенĕ. Унăн пулемечĕсемпе туписене пĕтернĕ.

ПХЕНЬЯН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Январĕн 12-мĕшĕнче хĕвелтухăçĕнчи фронтăн пур участокĕсенче те вăйлă çапăçусем пынă.

Хĕвеланăçĕнчипе вăтаçĕрти фронтсенче уйрăмах паллă улшăну пулман.

Ĕнер Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен отрячĕсем тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Мунчхонь Намхо тата Дюнхва хулисенчи мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă пулнă.

Иран правительстви Англи правительствине нота панă

ПАРИЖ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран çапла пĕлтерет: Иран правительстви Великобританин Тегеранри посольствине нота панă. Иран правительстви унăн Иранри нефте кама сутас тет, çавна сутма право пурри, нефть промышленноçне национализацилес енĕпе тата Иранăн нефть пуянлăхĕсемпе усă курас ыйтупа кирек мĕнле мерăсем те йышăнма право пурри çинчен тепĕр хут пĕлтернĕ.

Иран правительстви хăйĕн нотинче тĕнчери çĕршывсен Гаагăри сучĕн çак ĕçе, Иранăн шалти ĕçĕ пулса тăраканскерне, пăхса тухма право çукки çинчен тепĕр хут каланă.

Англи çарĕсем Египетра çĕнĕрен агрессиллĕ ĕç тунă

КАИР, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Египетри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи çарĕсем Суэц каналĕ патне пымалли çулсене пурне те пÿлсе лартнă, Суэц каналĕ патĕнчи хуласемпе Египетăн ытти пайĕсем хушшинчи çыхăнăва та татнă.

«Аз-Заман» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансем Суэц каналĕ патне никама та ямалла мар тата унтан никама та кăларса ямалла мар йĕрке тунă.

Египет шалти ĕçсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи çарĕсем Абу Сувейр хулине тата Исмаили каналĕн хĕвеланăçĕнчи çыранĕнчи икĕ яла хупăрласа илнĕ, хулапа ялсене ухтарнă. Пĕлтерÿре каланă тăрăх, акăлчансем унти çынсене хăйсен килĕсенчен хăваласа кăларнă, арçынсене йĕплĕ пăралук тытнă картишне хупнă, вĕсене хĕрарăмсемпе ачасенчен уйăрнă. «Аль-Мысри» хаçат çав ĕçе тунă çĕре Англин 1.500 салтакĕ хутшăнни çинчен пĕлтернĕ. Египет хресченĕсем хушшинче чылай çынсене арестленĕ.

Иракра прогрессивнăй деятельсене хĕсĕрлеççĕ

БЕЙРУТ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Иракри «Саут аль-Ахали» хаçат çапла пĕлтерет: Багдадри суд Абдул Раззак Шейх Алие пĕр çулталăка тĕрмене хупма приговор йышăннă. Абдул Раззак Шейх Али Берлинра, пĕтĕм тĕнчери çамрăксемпе студентсен фестивалĕнче пулнă. Вăл «Миршĕн кĕрешме чĕнекен хăватлă сасă» ятлă кĕнеке çырнă. Ку кĕнеке нумай пулмасть Багдадра пичетленсе тухнă.

Абдул Раззак Шейх Али судра çапла каланă: «Пирĕн çĕршыв Америкăпа Англин çар бази ан пултăр тесе, эпир миршĕн кĕрешетпĕр. Эпĕ «Нукрат ас-Сильман» тата «Аль-Кут» концентраци лагерĕсенче хĕн-хур куракан демократсен ячĕпе Берлинра сăмах каларăм. Эпĕ, ытти нумай çынсем пекех, миршĕн, наци ирĕклĕхĕшĕн тата Англипе Ирак пĕр-пĕрин хушшинче 1930 çулта тунă договора пăрахăçлассишĕн кĕрешетĕп», тенĕ. Унтан вăл: «Çакă вара преступлени туни пулать-и?» тесе ыйтнă.

БЕЙРУТ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Саут аль-Ахали» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Иракри паллă прогрессивнăй поэта, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членне Мухаммед Махди аль-Джавахирие Иракри политикăллă деятельсен сутăнчăклăхне тата вĕсем Англи империализмĕн тарçисем пулса ĕçленине тăрă шыв çине кăларакан сăвăсем пичетлесе кăларнăшăн суда панă.

Республикăри шахмат чемпионачĕ

Республикăри 17-мĕш шахмат чемпионатĕнче кĕрешÿ хĕрсех пырать. Çамрăк шахматистсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Январĕн 13-мĕшĕ тĕлне çиччĕ вăйă пулнă. Чемпионатăн чи çамрăк участникĕ, пĕрремĕш разрядри шахматист Сергиевский Персовран, Зилгаловран, Соболевран тата Егоровран выляса илнĕ. Вăл пĕр парти те выляса яман. Чемпионатăн тепĕр çамрăк участникĕ Егоров ăнаçлă вылять. Вăл Илларионова, республика чемпионне Никитина çĕнтерчĕ. Çапла вара, Никитин виçĕ парти выляса ячĕ. Никитин хăй Персовран, Аляутдиновран, Федоровран выляса илчĕ.

Сиротин 5-мĕш вăйăра Шупашкар хула чемпионне Чугунова çĕнтерчĕ. Чугунов 7-мĕш вăйăра Смирновран выляса илчĕ.

Чемпионатра Сергиевский малта пырать. Унăн—7 очкоран 6,5 очко.

Чăваш драматургĕн пьесине тутар театрĕнче лартаççĕ

Тутар республикинчи Эльметри колхозпа совхоз театрĕ кăçалхи сезонра чăваш драматургĕ Г. Харлампьев çырнă «Çурхи кĕвĕсем» ятлă пьесăна лартма пуçланă. Ăна тутарла РСФСР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Т. Гиззат куçарнă. Спектакле Халялов режиссер йĕркелесе хатĕрленĕ. Тĕп рольсенче Тутар АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артистки Губайдуллина, Умеров Шакирова тата ытти артистсем выляççĕ.

Ответлă редактор заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

Предприятисемпе стройкăсенче ĕçлеме рабочисем пухакан Чăваш республикинчи кантур (оргнабор кантурĕ) çакăн çинчен пĕлтерет:

Кантур, ĕç договорĕ туса,—

Свердловск облаçĕнчи Нижний Тагила, Баженово станцине,

Молотов облаçĕнчи Закамска, Боровска тата Чусовая станцине

ĕçлеме кайма рабочисем пухать.

Асăннă вырăнсенчи предприятисенче ĕçлеме кайма ĕç договорĕ тунă рабочие пĕр вăхăтлăх пулăшу 150—300 тенкĕ, суточнăй 10—15 тенкĕ параççĕ. Ĕçлемелли вырăна çитме çул укçи тата 240 килограмм таран багаж илсе кайма укçа государство шутĕнчен параççĕ.

Икĕ çулталăк е унтан ытларах вăхăт ĕçлеме договор тунă рабочие пĕр вăхăтлăх пулăшу (ăна каялла шыраса илмеççĕ) икĕ хут нумайрах параççĕ.

Промышленноçра ĕçлеме каймалли договор райисполком çумĕнчи уполномоченнăй патĕнче, Шупашкарта — Заводской урамри 34-мĕш çуртра тума пулать.

Чăваш республикинчи оргнабор кантурĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ-01211 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.